24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮНЬ
6
ЭРНЕКУН
131 (5846) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Капитализмлă йĕри-тавралăх çинчен ан манăр.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне çырăнса илсе, хамăр тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне çирĕплетĕр!

Литературăпа искусствăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемшĕн!

Пирĕн хаçатăн паянхи номерĕнче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Октябрьти Социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă тĕле литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕшĕн правительство енĕпе конкурс ирттересси çинчен» йышăннă постановлени тата конкурс условийĕсем пичетленсе тухаççĕ.

Пĕтĕм совет халăхĕ Октябрьти аслă революци 25 çул тултарнине социализм строительствинчи чаплăран та чаплă çĕнтерӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленет. Çак тапхăрта туса ирттерме палăртнă конкурс литературăпа искусство работникĕсен пурнăçне, паллах, пысăк хавхалану, чăн-чăн творчествăллă çĕкленӳ кӳме тивĕçлĕ. Пултарулăх çăлкуçĕ тата туллинрех те анлăнрах тапма тытăнмалла, халăх хушшинчен çĕнĕ талантсем çĕкленмелле. Çак конкурса ирттересси литературăпа искусство работникĕсемшĕн çеç мар, пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн чăннипех те пысăк ĕç пулса тăрать.

Конкурс условийĕсенче чи малтан «конкурса чăваш литературипе искусствин (проза, поэзи, драматурги, живопиç, скульптура, музыка) вĕçне çитиччĕнех туса çитернĕ, оригиналлă, халиччен пичетре пулман тата, пуринчен ытларах, хальхи вăхăтри темăпа çырнă произведенийĕсене тăратмалла» тесе кăтартнă.

Ку вăл конкурса хутшăнакан писательсемпе искусство работникĕсем умне пысăк требовани лартнине пĕлтерет. Чăннипе калас пулать, пирĕн литературăпа искусствăра хальхи вăхăтри темăпа çырнă, социализм строительствине анлăн та тарăннăн кăтартса паракан, пирĕн аслă саманари положительнăй образа, совет çыннин историллĕ çĕнĕ сăнарне туллин те уçăмлăн ӳкерсе паракан оригиналлă произведенисем питех те сахал-ха. Çавăнпа та конкурса пуçарнă чухне правительство чи малтан хальхи вăхăтри темăна асра тытнă. Совет патриотизмĕ, нумай миллионлă совет халăхĕн социализм строительствинчи паттăрла кĕрешĕвĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн тăван çĕршыва тăшмансенчен хӳтĕлес ĕçри героизмĕ, Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи тăванлăх, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хушшинче коммунистла çĕнĕ мораль çитĕнсе пырса, никам çĕнтерейми хăватлă вăй пулса тăни,—сахал-и ĕнтĕ пирĕн аслă самана паракан чаплă та пархатарлă темăсем!

Совет халăхĕн аслă пурнăçĕпе пурăнакан писатель, художник, композитор тема тĕлĕшĕнчен аптăрас çук. Халăх пурнăçĕн кашни сыпăкех уншăн паха та чĕрĕ тема пулса тăрать, вăл тема пирки çухалса çӳремест.

Конкурса, пуринчен ытларах, хальхи вăхăтри темăпа çырнă произведенисем тăратмалла тени вăл, паллах, халăхăн иртнĕ йывăр кунçулне кăтартса паракан историллĕ произведенисем пулмалла мар тенине пĕлтермест. Пĕтĕçтерсе каласан, конкурс пур тĕрлĕ темăпа çырнă произведенисем енчен те пуян пулмалла. Çавăн пекех произведенисен жанрĕсем тĕлĕшпе те творчество работникĕсене пысăк ирĕк, нумай тĕрлĕ майсем панă. Суйла, мĕнле жанр саншăн çывăхрах, меллĕрех, çав жанрпа ĕçле, кăтарт хăвăн чăн-чăн пултарулăхупа талантна!

Кăçалхи конкурс литературăпа искусствăра халиччен туса ирттернĕ конкурссенчен пур енĕпе те уйăрăлса тăрать. Ку конкурс — вăл правительство ирттерекен конкурс. Халиччен конкурссене литература енĕпе хăйне уйрăм, искусство енĕпе хăйне уйрăм ирттернĕ пулсан, çĕнĕ конкурс литературăпа искусствăн нумай тĕрлĕ отраçлисене пĕрле çавăрса илет. Ку ĕнтĕ писательсемпе искусство работникĕсене, калăпăр, опера çырнă чухне, пĕр-пĕр историллĕ пысăк картина ӳкернĕ çĕрте, пĕр-пĕринпе çыхăнса пĕрле ĕçлеме май парать. Çавăн пекех çĕнĕ конкурс премисен пысăккăшĕпе те халиччен конкурссенчен нумай малта тăрать.

Конкурс пулса иртмелли сроксем творчество работникĕсене пысăк произведенисемпе ĕçлеме çителĕклех май параççĕ. Паллах, кашни писателĕн, художникăн, композиторăн конкурс çинчен пĕлтериччĕнех пысăк произведенисен планĕсем пулма пултарнă. Унашкал плансемсĕр чăн-чăн творчество работникĕ пурăнма та пултараймасть. Конкурс çинчен пĕлтерни халĕ ĕнтĕ çав плансене пурнăçа кĕртме тытăнма, çĕнĕ плансем çуратма хавхалантарать.

Нумаях та пулмасть Совет правительстви наукăри, изобретательствăри, искусствăпа литературăри пысăк та чаплă çитĕнӳсемшĕн темиçе çĕр çынна Сталинла премисем пачĕ. Сталинла преми лауреачĕсем пирĕн аслă совет халăхĕн чи пултаруллă та мухтавлă ывăл-хĕрĕсем. Вĕсем хăйсен ĕçĕсемпе пирĕн тăван çĕршывăн вăйĕпе чапне тата çӳлерех çĕклерĕç. Совет правительстви йышăннă тăрăх, Сталинла премисем çулсеренех пулса пымалла. Творчествăллă тулли пурнăçпа пурăнакан кашни совет çынни Сталинла преми лауреачĕ пулас тесе ĕмĕтленме пултарать, ĕмĕтленме тивĕçлĕ те.

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă тĕле чăваш литературипе искусствин чи лайăх произведенийĕсемшĕн правительство енĕпе ирттерекен конкурс пирĕн творчество работникĕсемшĕн Сталинла преми лауреачĕ патне çити ӳсмелли çул çинче паллă пусăм пулса тăрать. Конкурс пирĕн литературăпа искусствăна çĕнĕ те паха повĕçсем, романсем, поэмăсем, драмăсем, картинăсем, скульптурăсем, юрăсем, кантатăсем, симфонисем, музыкăллă комедисем, оперăсем парса пуянлатмалла. Çак конкурсра чăваш халăхĕн художествăллă пуянлăхĕ темиçе хут ӳсни курăнма тивĕçлĕ.

Паллах, çакна тума творчество работникĕсен халичченхинчен темиçе хут вăйлăрах та хĕрӳллĕнрех ĕçлени кирлĕ. Конкурс пирĕн çĕршывра социализмлă ăмăртăвăн нумай тĕрлĕ формисенчен пĕри пулса тăрать. Писательсемпе художниксем, скульпторсемпе композиторсем хушшинче чăн-чăн ăмăрту пуçланса каймалла. Писательсен, художниксен тата композиторсен Союзĕсенче халиччен пулнă çитменлĕхсене, уйрăмах, пĕр-пĕрне кураймасăр, пĕр-пĕрин ĕçне хакламасăр пурăннине пуçĕпех пĕтермелле. Творчество работникĕсен Союзĕсенче чăн-чăн творчествăллă атмосфера пулмалла. Союз руководителĕсен писательсене, художниксемпе композиторсене кулленхи ĕçре тимлĕн пулăшса пыни кирлĕ.

Конкурсра литературăпа искусствăн профессионал-работникĕсен çеç мар, литературăпа искусство тĕлĕшĕнчен кашни хăй енĕпе пултаракан юлташсен те хутшăнма май пур. Çак пысăк конкурсра халăх хушшинче çитĕнсе пыракан çĕнĕ талантсем палăрассине шанас килет.

Чăваш халăхĕ хăйĕн литературăпа искусство работникĕсенчен пурнăçа туллин те тарăннăн çутатса паракан, аслă Сталин саманине тивĕçлĕ произведенисем ыйтать. Чăваш совет писателĕсем, художникĕсемпе композиторĕсем правительство ирттерекен конкурса активлăн хутшăнса, халăх ыйтакан произведенисем парĕç. Конкурсра тивĕçлĕ преми илнĕ, пур енчен те пулса çитнĕ, оригиналлă произведенисем Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă ятпа халăха панă паха парнесем пулса тăрĕç.

Пире Хĕрлĕ Çар тĕреклĕ пулни кирлĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июнĕн 4-мĕш **(Телефон тăрăх).** Районри ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи пĕтĕм ĕççыннисем пекех, çĕнĕ заема пысăк кăмăлпа çырăнса илеççĕ. Виçĕ кун хушшинче районра çĕнĕ заема 450 пин тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран колхозниксем хушшинче 211 пин тенкĕлĕх сарнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, çырăнакансен шучĕ чылай пысăкрах. Пĕлтĕр Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) Заемне 3 кун хушшинче 235 пин тенкĕлĕх сарнă пулнă, 9 пин тенкĕ укçине пухнă. Кăçал пĕлтĕрхинчен 215 пин тенкĕлĕх ирттерсе сарнă, 24 пин тенкĕ укça пухнă. Заем районри ĕççыннисем хушшинче çулран çулах ытларах сарăлса пыни вĕсен пурнăçĕ лайăхланнине кăтартса парать.

Урмаел, Аслă Çĕрпӳел ялсовечĕсем заем сарас тĕлĕшпе аван ĕçлерĕç. Урмаел ялсоветĕнче бюджетпа пăхнă хисепрен ирттерсе сарнă, пĕр пин тенкĕ укça пухнă. Çĕрпӳел ялсоветĕнче 19.436 тенкĕлĕх сарнă, 3166 тенкĕ укça пухнă. Кайнăк ялсовечĕ те начар мар ĕçлет. Ку ялсоветре кĕрекен «Дубравка» колхозра 4 пин тенкĕлĕх, «Кзыл забанча» колхозра 2750 тенкĕлĕх сарнă, 745 тенкĕ укça пухнă.

Тăманлă Выçли ялсоветĕнче бюджетпа заем укçи 9500 тенкĕ пухма палăртнă, унта 10195 тенкĕлĕх сарнă, 3 пин тенкĕ укça пухнă. «Новая жизнь» колхоз колхозникĕсем 1400 тенкĕлĕх çырăннă. 60 çулхи Бормотин заем çырăннă чух çапла каланă:

— Пирĕн çĕршыва Хĕрлĕ Çар сыхласа тăрать. Унта ман хамăн та икĕ ывăл пурăнаççĕ. Пире Хĕрлĕ Çар тĕреклĕ пулни кирлĕ. Çавăнпа эпĕ çĕнĕ заема 60 тенкĕлĕх çырăнатăп, — тенĕ.

Ун хыççăн Гладкин, Иванов колхозташсем 75-шер тенкĕлĕх çырăннă.

Хирти Мăратри «Красный Восток» колхоз членĕ Васильев 150 тенкĕлĕх, Попов, Андрианов тата Макаров юлташсем 75-шер тенкĕлĕх çырăннă.

Заем çырăнас ĕç районра хĕрӳллĕн пырать.

М. ЯКОВЛЕВ.
А. ГАВРИЛОВ.

Чугунçул рабочисен коллективĕнче

ÇĔМĔРЛЕ. Чугунçул станцинчи рабочисен коллективĕ çĕнĕ заема пысăк çĕкленӳпе хапăл туса çырăнать. Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем кăларни çинчен радио тăрăх панине итлесенех митинг пулчĕ. Митинграх заем çырăнма пуçларĕç.

Станцинче ĕçлекен рабочисем кашниех пĕр уйăх ĕçукçинчен кая мар çырăнаççĕ. Селезнев юлташ 670 тенкĕлĕх, Жынов юлташ — 625 тенкĕлĕх, Давыдова 275 тенкĕлĕх, Охтярова — 275 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Çавăн пекех районри типографинче ĕçлекен рабочисем те кашниех пĕр уйăх укçинчен кая мар заем çырăнчĕç.

А. ВАСИЛЬЕВ.

РАЙОНСЕНЧЕН ПĔЛТЕРЕÇÇĔ

КАЛИНИНО, июнĕн 4-мĕшĕ. **(Телефон тăрăх).** Районра рабочисемпе служащисем хушшинче çĕнĕ заема 187 пин тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 200 пин тенкĕлĕх сарнă. Заем укçине 35 пин тенкĕ пухнă.

Заем сарас ĕçре Мăн-Явăш ялсовечĕ малта пырать. Кунта çĕнĕ заема 13.445 тенкĕлĕх сарнă. Укçине те çавăн чухлех пухса çитернĕ. Çавăн пекех «Синьял» колхозĕнче те заем сарассине ăнăçлăн йĕркеленĕ. Ку колхозра халĕ 5.000 тенкĕлĕх заем сарса, çавăн чухлех заем укçине те пухнă.

А. ИВАНОВ.

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 4-мĕш. **(Телефон тăрăх, хамăр корр.).** Ĕнер 2 сехет тĕлне районри рабочисемпе служащисем çĕнĕ заема 212 пин тенкĕлĕх çырăннă, колхозниксемпе единоличник-хресченсем — 61 пин тенкĕлĕх. Районри хăшпĕр предприятисем, организацисемпе учрежденисем заем сарас ĕçе вĕçленĕ те ĕнтĕ.

Çĕмĕрлери виçĕ урамри килхуçи хĕрарăмĕсем çĕнĕ заема 2000 тенкĕ яхăн çырăннă.

ПЕРВОМАЙСКОЕ. июнĕн 4-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районри ĕççыннисем хушшинче çĕнĕ заема çырăнасси анлăн сарăлса пырать. Колхозниксем нумайĕшĕ заем укçине çырăннă чухнех тӳлеççĕ. Турхан ялсоветĕнче — 2700 тенкĕ, Нăрваш Шăхальре — 2580 тенкĕ, Упантара — 2900 тенкĕ, Кив Эпеçре — 2600 тенкĕ заем укçи пухнă.

Пăлапуç ялсоветне кĕрекен «Комсомолец» колхоз председателĕ П. Тарасов юлташ çĕнĕ заема 500 тенкĕлĕх, унăн заместителĕ Казаков—500 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Тарасов юлташ укçине те пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

«Пионер» колхозра та заем сарас ĕçе аван организациленĕ. Унта июнĕн 3-мĕшне 3 пин тенкĕлĕх ытла çырăннă.

Колхозниксем хушшинче заем укçине тӳлесе татнисем ӳссех пыраççĕ. Ĕнерхи куна районĕпе 15 пин тенкĕ ытла заем укçи пухнă.

И. ЧУДАКОВ.

СЕНТЕРВАРРИ, июнĕн 3-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Правительство Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларасси çинчен йышăннă постановленине радио тăрăх парсанах, Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнчи рабочисемпе служащисен тата преподавательсемпе студентсен митингĕ пулчĕ. Вăрман техникумĕн коллективĕ правительство постановленине пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕ. Çĕнĕ заема кашниех çырăнса илеççĕ. Паянхи куна техникумра 17.160 тенкĕлĕх çырăннă. Техникум директорĕ Г. Антонов юлташ 960 тенкĕлĕх, завуч Трофимов юлташ 750 тенкĕлĕх, уборщица Димитриева юлташ пĕр уйăхри ĕçукçи чухлĕ, студентсем Коробельниковпа Ермолаев 75-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

В. ЗАХАРОВ.

МУЧИ ТЕЛЕЙĔ

ЭЛĔК. **(Телефон тăрăх).** Крымзарайкăри колхозник Анисим Еремеев 50 çултан иртнĕ ĕнтĕ. Çак кунсенчех Еремеев патне «Коммунар» колхозри заем уполномоченнăйĕ пырса, ăна государство çĕнĕ заем кăларни çинчен каласа панă. Мучи çакăн çинчен илтсенех хĕпĕртесе савăннă.

— Çыр, юлташ. Эпĕ вăл заема Балти тинĕс хĕрринчи государствăсем пирĕн çĕршыв çумне пĕрлешнĕшĕн çырăнатăп, — тенĕ вăл подпискăна йĕркеленĕ чухне.

Кун пек патриотсем колхозсенче питĕ нумай. Крымзарайкăри Антон Ильич та 80 çултан иртнĕ. Çĕнĕ заема 50 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çав вăхăтрах 25 тенкĕ тӳленĕ.

Вăрманкасри «Светлый путь» колхозри Г. Илларионов колхозник çĕнĕ заема 100 тенкĕлĕх çырăннă.

Икĕ кун хушшинче Крымзарайка ялсоветĕнчи колхозсенче (ялсоветра пурĕ 6 колхоз) çĕнĕ заема 16.530 тенкĕлĕх сарнă.

Заем сарас тĕлĕшпе уйрăмăнах «Светлый путь», Войков ячĕпе тăракан тата «Пĕрлешӳ» колхозсем аван ĕçлеççĕ. Ку колхозсенче заема пур колхозниксем те çырăннă.

Крымзарайка ялсовечĕ заем сарас тĕлĕшпе халĕ районра иккĕмĕш вырăн йышăнса тăрать. Заем сарассипе пĕрлех облигацисене тĕрĕслессине организациленĕ, вăл ĕçе кашни ялтах вулав çурчĕн заведующийĕ Е. Алексеевăпа колхоз председателĕсем йĕркелесе пыраççĕ.

И. МОСЕЕВ.

Пĕлтĕрхи хисепрен иртет

СЕНТЕР. **(Телефон тăрăх).** Шашкар ялсоветне кĕрекен колхозсенче çĕнĕ заема июнĕн 4-мĕшĕ тĕлне мĕнпурĕ 7.415 тенкĕлĕх илме çырăннă.

«Красный маяк» колхозри колхозниксем 1.380 тенкĕлĕх, «Аврора» колхозри колхозниксем 3.000 тенкĕлĕх çырăннă.

С. ОРЕХОВ.

Заем сарас ĕçре малта пыракансене премилесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1941 çулти июнĕн 5-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Чăваш АССР Совнаркомĕ çакна паллă тăвать: агитациллĕ-массăллă ĕçе анлăн сарса янă, парти, совет тата финанс активне тĕрĕс вырнаçтарса тухнă никĕс çинче тата ĕççыннисен ăнлануллăхĕ пысăк пулнипе, республикăри чылай учрежденисем, предприятисем, ялсоветсем тата колхозсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне çырăнас ĕçе ăнăçлăн туса пыраççĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарабайкасси ялсовечĕ, Çĕрпӳ районĕнчи Кĕçĕн Кипекçе ялсовечĕ, Шăмăршă районĕнчи Чепкас-Никольск ялсовечĕ, Калинински районри Мăн Явăш ялсовечĕ уйрăмах лайăх результатсем панă, заем çинчен йышăннă постановлени тухни çинчен пĕлтернĕ кунах вĕсем ĕçлеме пултаракан пур колхозниксене те заем çырăнтарнă тата заем подписки тăрăх взноссене пĕтĕмĕшпех пухса пĕтернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ **çапла йышăнать:**

1. Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне сарас тĕлĕшпе отлично ĕçленĕшĕн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарабайкасси ялсоветне клуб тума 10 пин тенкĕ укça парса, Çĕрпӳ районĕнчи Кĕçĕн Кипекçе ялсоветне клуба туса çитерме 10 пин тенкĕ парса, Шăмăршă районĕнчи Чепкас-Никольск ялсоветне ялсовечĕн радиоузелĕ валли оборудовани илме 8 пин тенкĕ парса, Калинински районри Мăн Явăш ялсоветне вулав çурчĕ валли оборудовани илме 8 пин тенкĕ парса премилес.

2. Заем сарас тĕлĕшпе ĕçе лайăх организациленĕшĕн, пуçарулăхпа оперативлăх кăтартнăшăн Тарабайкасси ялсовечĕн исполком председательне Шорников юлташа, Кĕçĕн Кипекçе ялсовечĕн исполком председательне Скворцов юлташа, Чепкас-Никольск ялсовечĕн исполком председательне Патов юлташа, Мăн Явăш ялсовечĕн исполком председательне Петров юлташа, çак ялсоветсенчи заем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйсене тата финанс активне **благодарность** парса пĕлтерес.

3. Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри мĕнпур ялсоветсене, мĕнпур совет, финанс активне, комсодсене тата заем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйсене массăллă-политикăллă ĕçе татах та анлăрах сарса яма, социализм строительстви ĕçĕнче, хамăрăн тăван çĕршывăн оборонăллă хăватне çирĕплетес ĕçре совет заемĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен мĕнпур ĕççыннисене ăнлантарса пама тата çапла ĕçленĕ никĕс çинче Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне сарас ĕçе ăнăçлăн вĕçлеме чĕнет.

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ А. СОМОВ.

Чăваш АССР Совнарком ĕçĕсен Управляющийĕ Г. ИВАНОВ.

Альгеш ялсоветĕнче

КУКЕÇ. Июнĕн 2-мĕшĕнче Совет правительстви Виççĕмĕш Пятилеткăн (4-мĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларасси çинчен радиопа пĕлтерсенех, Альгеш ялсоветĕнчи (Шупашкар р.) колхоз председателĕсен, ферма заведующисен, бригадирсен тата агитаторсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пурте пĕр кăмăллă пулса çĕнĕ заем кăларнине ырларĕç. Çавăнтах заема çырăнасси пуçланчĕ.

— Государствăна кивçен панă укça халăх хуçалăхне тата унăн оборонине тĕреклетнĕ çĕре каять. Ана кашни Совет гражданинĕ пĕлсе тăрать. Эпĕ çĕнĕ заема 200 тенкĕлĕх çырăнса илетĕп,—тет «Кадыков» колхоз председателĕ П. Галинов юлташ.

И. Никитин та (Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ) 200 тенкĕлĕх çырăнса, 100 тенкĕ укça çавăн чухнех тӳлерĕ.

— Эпĕ те пĕр уйăх ĕçукçи чухлĕ çырăнатăп,—тет ялсовет председателĕ Кадыков юлташ.

Колхозсенче заем çырăнасси хастаррăн пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем заема пысăк кăмăлпа çырăнаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕ С. Кольцов 150 тенкĕлĕх çырăнса, 50 тенкĕ çавăнтах тӳлерĕ. Колхозсенчи ферма заведующийĕсем, бригадирсем 100-шер тенкĕрен кая мар çырăнчĕç. Çапла вара пĕр самантрах пĕтĕмпе 1600 тенкĕлĕх заем сарăлчĕ.

Колхозсенче митингсем пулса иртрĕç. Заема пурте пĕр кăмăлпа кĕтсе илчĕç. «Мартăн 8-мĕшĕ» колхозра, иртнĕ çул 780 тенкĕлĕх сарнă пулсан, кăçал 2290 тенкĕлĕх сарчĕç. Ворошилов, Кадыков ячĕпе тăракан колхозсенче пĕтĕмпе 3500 тенкĕлĕх сарнă. Колхозниксем заем укçисене те çавăнтах тӳлесе пыраççĕ.

Заема çырăнасси пур колхозсенче те хастаррăн пырать.

Е. РИВАНОВ.

ЗАЕМ ХРОНИКИ

▲ ÇĔМĔРЛЕ. Мыслец ялсоветне кĕрекен Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем Виççĕмĕш Пятилеткăн (4-мĕш çулхи кăларăм) Заемне хаваслансa çырăнаççĕ. Колхоз председателĕ Кузьмин юлташ 100 тенкĕлĕх çырăннă. Колхозник Е. Храмов юлташ çĕнĕ заема 100 тенкĕлĕх çырăннă. Çавăн пекех С. Кузьмин, С. Путяров, Т. Иванов, П. Кузьмин колхозниксем кашниех çĕршер тенкĕ çырăнчĕç. Красноармеец арăмĕ Е. Трясугина юлташ 50 тенкĕлĕх çырăннă.

А. З.

▲ ÇĔРПУ. Типографинчи рабочисемпе служащисем, çĕнĕ заем тухни çинчен радиопа пĕлтерсенех, митинг туса ирттернĕ. Ун хыççăнах заем çырăнма пуçланă. Заема вĕсем пурте пĕр уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнса илнĕ.

Н. ИВАНОВ.

▲ ШУПАШКАР. Чăвашсен Государствăн Педагогика Институтĕнче вĕренекен студентсем çĕнĕ заема хапăл туса çырăнаççĕ. Заем тухнă ятпа кашни факультетрах митингсем пулса иртнĕ. Митинг хыççăнах заем çырăнма тытăннă. Пĕр кун хушшинче 10.710 тенкĕлĕх çырăннă. Уйрăм студентсем: И. Никандров — 500 тенкĕлĕх, А. Степанова —150 тенкĕлĕх, Гарин — 100 тата Матвеев студентсем 100-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

И. НАРЫШКИН.

Шупашкар ĕççыннисен пысăк çĕкленĕвĕ

● Чăваш аптекоуправленийĕнче тата унăн системинчи учрежденисенче ĕçлекенсем çĕнĕ заем кăларни çинчен пĕлтернине радио тăрăх итленĕ хыççăнах пурте пĕр шухăшлă пулса, çĕнĕ заема пĕр уйăх ĕçукçиллĕх çырăнса илчĕç.

И. ТАТАРОВ.

● Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕн коллективĕ СССР Совнаркомĕ Государствăн Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемне кăларасси çинчен йышăннă постановленине çавтери пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ. Рабочисемпе служащисем çĕнĕ заема пĕр сехет хушшинчех 29.275 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Вăл пĕр уйăх ĕçукçи фонĕнчен чылай пысăк.

И. ЖУРАВЛЕВ.

● «Красный молот» артелĕнче ĕçлекенсемпе служащисем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне мĕнпурĕ 13.865 тенкĕлĕх çырăннă.

● Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен артельре ĕçлекенсемпе служащисем çĕнĕ заема 24.705 тенкĕлĕх çырăннă.

Чистякова работница (инвалид) хăйĕн уйăх çурăри ĕçукçи чухлĕ илнĕ. Çавнашкалах тата Филиппова, Аршинова юлташсем икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ илме çырăннă.

● Учительсен пĕлӳне ӳстермелли институтри научнăй сотрудниксемпе курсантсем СССР Финанс Халăх Комиссарĕ Зверев юлташ çĕнĕ заем çинчен тунă доклада радио тăрăх итлерĕç. Ун хыççăн заем çырăнас ĕç пуçланчĕ. Институтра пурĕ 11.120 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Преподавательсемпе научнăй сотрудниксем çĕнĕ заема уйăхри ĕçукçинчен ирттерсе çырăнса илеççĕ. Николаева — 900 тенкĕлĕх, Трофимов — 800 тенкĕлĕх, Кивкина — 500 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Курсантсем те çĕнĕ заема пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Курсантсенчен И. Степанов — 150 тенкĕлĕх, Баранова—50 тенкĕлĕх, Г. Андреев — 50 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

О. ЯРУСОВ.

● СССР Совнаркомĕ Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларма йышăннă постановленине Чăвашкоопинсоюзра ĕçлекенсем тулли кăмăлпа ырларĕç, çĕнĕ заема хаваслансах çырăнма тытăнчĕç. Пурте пĕрер уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнаççĕ.

Малтанхи кун 21 çын 7620 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

М. МАЛЬЦЕВ.
Комсод председателĕ.

● «Кожупряжь» артелĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисем 26.470 тенкĕлĕх çырăннă.

М. В.

РАЙОНСЕНЧЕН ПĔЛТЕРЕÇÇĔ

КӲКЕÇ. Тренкассинчи «Актив» колхоз членĕсем СССР правительстви Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларасси çинчен йышăннă постановленине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Июнĕн 3-мĕшĕнче колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем государствăн çĕнĕ заемне пĕр кун хушшинче 2 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç. Колхоз председателĕ Спиридонов юлташ çĕнĕ заема 350 тенкĕлĕх, колхоз счетоводĕ Иванов юлташ 200 тенкĕлĕх, конюх И. Яковлев юлташ 100 тенкĕлĕх çырăнчĕç. И. Николаев тата Д. Григорьев колхозниксем заем укçине пухурах парса татрĕç.

Г. П.

ЕТĔРНЕ, июнĕн 4-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районĕпе çĕнĕ заема 495 пин тенкĕлĕх сарнă. Иртнĕ çулта колхозниксем заема 41 пин тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçал 127 пин тенкĕлĕх çырăннă.

Киров ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕ заема пурĕ 20 пин тенкĕлĕх çырăннă. Заем укçине 2.500 тенкĕ тӳленĕ те ĕнтĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Колочков юлташ 350 тенкĕлĕх, бригадирсем — Фидин тата Юхтанов юлташсем 100-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç. Колхозниксем нумайĕшĕ аллăшар тенкĕлĕх çырăннă.

А. ЧЕХОНИН.

ЭЛĔК, **(Телефон тăрăх).** Ефремкасси ялсоветĕнчи ĕççыннисем правительство çĕнĕ заем кăларни çинчен радио тăрăх пĕлтернине пит те пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Çĕнĕ заем кăларни çинчен радио тăрăх пĕлтернĕ хыççăнах кунти колхозниксем 1500 тенкĕлĕх, ялсовет исполкомĕнче ĕçлекенсем 1065 тенкĕлĕх, учительсем 2785 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Колхозниксем çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çырăнса илеççĕ. Колхоз председателĕ А. Ильин юлташ 200 тенкĕлĕх, Ф. Александрова — 100 тенкĕлĕх, И. Александрова — 50 тенкĕлĕх, Ф. Волков — 75 тенкĕлĕх, П. Никоноров 50 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Кашни колхозрах çĕнĕ заем çинчен стена хаçачĕсем кăларнă.

А. ОРЛОВ.
Ефремкасси ялсовет исполкомĕн председателĕ.

ЭЛĔК, июнĕн 3-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Ĕнер каçхине 12 сехет тĕлне районри ĕççыннисем (12 ялсовет тăрăх) çĕнĕ заема 250 пин тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

Заем сарас ĕç уйрăмăнах Çулавăç тата Элекенушкăн ялсовечĕсенчи колхозсенче ăнăçлăн пырать. Çулавăç ялсоветĕнчи колхозниксем 8085 тенкĕлĕх, Элекенушкăнри колхозниксем 7320 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Пĕтĕм районĕпе малтанхи кун çĕнĕ заемшăн укçан 10 пин тенкĕ пухнă.

(Хамăр корр.).

ПЫСĂК САВĂНĂÇ

ÇĔМĔРЛЕ. Хутар ялсоветĕнчи ĕççыннисем Совет правительстви Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларнине праздник пек кĕтсе илчĕç. Урамсем хушшинче хĕрлĕ ялавсем, заемсем çинчен калакан плакатсем, лозунгсем.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларни çинчен радио тăрăх итленĕ хыççăн, мĕнпур бригадăсенче митингсемпе пухусем пулса иртрĕç.

6-мĕшпе 7-мĕш бригадăсенчи митингсене 70 колхозник пуханнă. Совет правительстви кăларнă заем çинчен доклад итленĕ хыççăнах, Н. Мозяков колхозник çĕнĕ заема 500 тенкĕлĕх çырăнса, унтах 300 тенкĕ укçан хывса, çапла каланă: «Эпир правительство кăларнă çĕнĕ заема ырлатпăр. Вăл пирĕн чечекленекен çĕршывăн хăватне, хамăр юратакан Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне, Хĕрлĕ Флотне çирĕплетме пулăшать»,—тенĕ.

Унтан вара колхозниксем пĕрин хыççăн тепри черет тăрса, çĕнĕ заема çырăнчĕç. Ф. Яковлев—200 тенкĕ, Е. Наумов—150 тенкĕ, Е. Мигушов—150 тенкĕ, И. Алексеев—100 тенкĕ, А. Великов — 100 тенкĕ çырăнчĕç.

Çапла вара пĕр сехет хушшинче 6-мĕшпе 7-мĕш бригадăсенчи колхозниксем çĕнĕ заема 1800 тенкĕлĕх çырăннă.

Июнĕн 3-мĕшĕнче 10 сехет тĕлне ялсоветри служащисем пурте пĕр уйăх ĕçукçи чухлĕ—14 пин тенкĕлĕх сарнă.

Заем сарас ĕçре ялти коммунистсемпе учительсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Халĕ те çĕнĕ заем çинчен докладсем, калаçусем ирттереççĕ.

С. Б.

1.999 пин тенкĕлĕх

Пирĕн республикăри перекет кассисем 1940 çулта государство заемĕсем тăрăх 1 миллион та 999 пин тенкĕлĕх выляв укçи тӳленĕ. 1941 çулти тăватă уйăх хушшинче 988 пин тенкĕлĕх выляв укçи тӳленĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисене пулăшасси çинчен

ЕЛЧĔК. Районра пуçламăш парторганизацисем 15, вĕсенчен ялсоветсенче 5, колхозсенче 2, ыттисем вара районри учрежденисенче. Территорилле пуçламăш организацисем пурте ялсоветсенче шутланаççĕ. Вĕсем ялсоветсенче партипе правительство йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртес, государствăлла дисциплинăна çирĕплетес ĕçе ертсе, пулăшса пыраççĕ.

Аслă Елчĕк ялсоветĕнчи пуçламăш парторганизаци ялсоветпа, совет активĕпе çыхăнса ĕçлесе пырать. Партипе правительство лартнă задачăсене ĕççыннисене вăхăтра ăнлантарса парать, çав задачăсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыма ĕççыннисене мобилизацилет. Аслă Елчĕк ялсовечĕ районри ытти ялсоветсенчен малта пырать. Пуçламăш парторганизаци отчетпа суйлав пухувĕнче парса хăварнă сĕнÿсене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пырать, кашни коммуниста партиллĕ порученисем парать тата çав порученисене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслет.

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче çирĕп дисциплина тăвассишĕн, вăйлă тырпулшăн, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерессишĕн кĕрешес ĕçе пуçарса пыраççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци колхоза начар мар ертсе пырать. Иртнĕ çулта колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 15 центнера яхăн тĕштырă туса илнĕ. Кăçалхи çуракине кĕске срокра пысăк пахалăхпа вĕçленĕ.

Колхоз государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарнă. Халĕ 700 çын вырнаçмалăх çĕнĕрен клуб тума тытăннă.

Сăръялĕнчи «Марс» колхозри пуçламăш парторганизацинче коммунистсем 7 çын тăраççĕ. Коммунистсен пухувĕсенче колхоз ĕçĕпе çыхăнса тăракан ыйтусене вăхăтра лартса сÿтсе-яваççĕ. Кашни коммунистăн порученисем пур. Коммунистсем хăйсене панă порученисене çийĕнчех пурнăçа кĕртеççĕ, колхоз производствинче ыттисене пример кăтартса ĕçлеççĕ. «Марс» колхоз районра лайăх ĕçлекен колхозсенчен пĕри шутланать.

Лайăх ĕçлекен парторганизацисем хушшинче начар ĕçлекенсем те пур. Парти райкомĕн задачи — малта пыракан парторганизацисен паха опычĕсене сарасси, начар ĕçлекен парторганизацисене тивĕçлипе пулăшса пырасси пулать. Парти райкомĕ хăйĕн инструкторĕсем урлă е ытти майсемпе пуçламăш парторганизацисене кирлĕ пулăшу парать.

Инструкторсем коммунистсен пухувĕсене хатĕрленсе ирттерес тата пухусенче сÿтсе-явма палăртнă ыйтусене тĕплĕн хатĕрлес ĕçре пуçламăш парторганизацисене тĕплĕн пулăшаççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци, коммунистсен пухувĕнче XVIII партконференцин итогĕсене сÿтсе-явас умĕн, фермăсенче, лаша витисенче, конюхсем пурăнакан çуртсенче тасалăхпа йĕркелĕх мĕнле пулнине, колхозри пурлăха мĕнле сыхласа усранине тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă. Çапла вара пухура вырăнти фактсене кăтартса панă, XVIII партконференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыма тивĕçлĕ решени йышăннă.

Парти райкомĕн инструкторĕсем тимлĕн ĕçленине пула, пуçламăш парторганизацисенче пуху протоколĕсене йĕркелес тата вĕсене парти райкомне тăратас ĕçсем чылаях лайăхланчĕç. Парти хуçалăхĕ мĕнле пулнине те кашни организацинчех тĕрĕслесе тухнă.

ВКП(б) райкомĕн инструкторĕсене участоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Вĕсем хăйсен участокĕсемшĕн ответлă пулса тăраççĕ. Инструкторсем райкомăн решенийĕсене çийĕнчех пуçламăш парторганизацисем патне çитерсе, вĕсене пурнăçлама тăрăшаççĕ. Уйăх вĕçĕнче вара инструкторсен канашлăвĕ пулса иртет, унта пĕр-пĕрин ĕçĕсемпе паллашаççĕ.

Парти райкомĕ колхозсенчи тата ялсенчи пуçламăш парторганизацисене ертсе, пулăшса пырас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă пулсан та, çитменлĕхсем пур-ха. Эпир çамрăк коммунистсем хушшинче ĕçлессине кирлĕ пек йĕркелеймен. Çавна пула кандидат стажĕ иртнĕ коммунистсем районра сахал мар.

XVIII партконференцин решенийĕсене тата партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пыма пирĕн пуçламăш парторганизацисене пулăшмалла. Çавна май колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантарулла-массăллă ĕçе куллен-кун туса пымалла.

С. МАКАРОВ.
ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

ВКП(б) Канаш райкомĕн пленумĕ

ВКП(б) Канаш райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум депора партин XVIII конференцийĕн решенийĕсене пурнăçа мĕнле кĕртни, ВКП(б) ретне илес ĕç мĕнле тăни çинчен тата организациллĕ ыйтусене сÿтсе-яврĕ. Пĕрремĕш ыйту тăрăх депо начальникĕ Прокофьев юлташ доклад туса пачĕ.

Депо коллективĕ юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатнă. Паровозсене халĕ график тăрăх юсаççĕ. Вĕсене юсас вăхăта тата вĕсен хакне чакарнă. Иртнĕ вăхăтсенче паровозсем ремонтра 3—4 талăк ларнă, ремонт ĕçĕсем 1000 тенкĕлĕх ытла пулнă. Халĕ 7 сехет хушшинче юсаса çитереççĕ, ремонт ĕçĕсен хакĕ те 500 тенкĕрен иртмест. Апрель уйăхĕнче депо 27 пин тенкĕ тупăш панă.

Çак çитĕнÿсене паровозсене юсакан комплекс ĕçне тĕрĕс организациленипе, Лунин меточĕпе ĕçлессине сарса пынипе тата нумай паровозсене хозрасчет çине куçарнипе тунă. Партин XVIII конференциччен депора комплекслă бригадăсем иккĕ пулнă. Ĕçе тĕрĕс организациленĕ хыççăн пĕр бригада кирлĕ мар шутлни палăрнă, вара ăна пĕтернĕ. Çавна май ĕçлекенсен хисепĕ те çурри яхăн чакнă. Депора юлнисем пурте тенĕ пекех стахановла ĕçлеççĕ. Паровозсем çинче Лунин меточĕпе ĕçлеме тытăннă 11 бригада кунран кунах лайăх тĕслĕхсем параççĕ. Çапла Назаров, Тимофеев тата ытти чылай машинистсем технически хăвăртлăха ÿстереççĕ, кăмрăк перекетлеççĕ. Кăмрăк январь уйăхĕнче 49 тонна, февральте 170 тонна, март уйăхĕнче 470 тонна, апрельте 320 тонна перекетленĕ. Брак пулассине пĕтернĕ.

Депора Лунин меточĕпе ĕçлекенсене кулленхи ĕçре пулăшса пыраççĕ. Вĕсене инструментсем çителĕклĕ тупса панă. Машинистсем кирлĕ материалсене хăйсемех илме пултараççĕ. Хăшпĕр машинистсем, слесарь ĕçне пĕлмен пирки, Лунин меточĕпе ĕçлеймеççĕ. Депора слесарь ĕçне вĕренмелли курс организациленĕ. Анчах та, халĕ курса çÿрекенсем сахал-ха. Пурĕ 30—40 çын çÿремелле, 5—6 çын çеç çÿреççĕ.

Депори тасамарлăха пĕтерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Юлашки вăхăтра паровозсене те тасарах тытма пуçланă.

Депора ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Çавăнпа унта СССР Верховный Совет Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указа пăсакансен хисепĕ чакмасть. Январь уйăхĕнче 5 çын, февральте 2 çын, мартра 5 çын, май уйăхĕнче 4 çын прогул тунă е ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнă. Дисциплинăна пăсакансем пурте тенĕ пекех паровознăй бригадăсенче ĕçленĕ. Ку ĕнтĕ паровознăй бригадăсенче политикăллă-массăллă ĕçе начар туса пынине кăтартса парать.

Пленумра тухса калакансем депора график тăрăх ĕçлеменнине, учетпа отчет ĕçне çителĕксĕр организацилленине, кăмрăка начар пăхса усранине тата политикăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пынине палăртса, çитменлĕхсене пĕтерме сĕнÿсем пачĕç.

Пленум ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулма Ф. А. Антонов юлташа суйларĕ, «Коммунизмшăн» хаçат редакторĕ пулма И. Корнилов юлташа çирĕплетрĕ.

М. ТИТОВ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXV çул тултарнă тĕле литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе правительство енĕпе конкурс ирттересси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1941 çулти майăн 30-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Литературăпа искусствăн оригиналлă тата пысăк художествăллă произведенийĕсене хатĕрлес шутпа, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXV çул тултарнă тĕле литературăпа искусствăн (проза, поэзи, драматурги, живопиç скульптура, музыка) чи лайăх произведенийĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе правительство енĕпе конкурс ирттерес.
2. Конкурс жюрине çакăн пек составпа çирĕплетес: Т. А. Ахазов (председатель), З. А. Андреева, В. Т. Харитонов, К. Е. Евлампьев, В. Т. Ржанов, А. А. Эсхель, Г. Д. Сергеев, И. С. Тукташ, В. О. Алагер, К. И. Иванов, А. Д. Демидов, В. П. Воробьев, Г. С. Лебедев, М. С. Спиридонов.
3. Кункурса ирттерме Искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕ тата Чăваш АСС Республикинчи Совет Писателĕсен Союзĕ хатĕрленĕ условисене çирĕплетес.
4. Чи лайăх произведенисене премилеме тата организациллĕ расходсем валли 1942 çулти бюджетран средствăсем уйăрса пама палăртас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. СОМОВ.
Чăваш АССР Совнарком ĕçĕсен Управляющийĕ Г. ИВАНОВ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXV çул тултарнă тĕле литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе ирттермелли

конкурс условийĕсем

Конкурса чăваш литературипе искусствин (проза, поэзи, драматурги, живопиç, скульптура, музыка) хатĕрлесе çитернĕ, оригиналлă, халиччен пичетленсе тухман произведенийĕсене, пуринчен ытларах кучухнехи темăпа çырнă произведенисене тăратаççĕ.

1. ПРОЗА ЕНĔПЕ:

Калавсен сборникĕсем, повеçсем, романсем (вĕсен пысăккăшĕ авторски 5 листран кая мар пулмалла).

Прозăн чи лайăх произведенийĕсене премилеме çакăн пек премисем тăвас:

Пĕрремĕш премисем—1 преми, 15.000 тенкĕ.

Иккĕмĕш премисем—2, кашни премийĕ 10.000 тенкĕ.

Виççĕмĕш премисем—3, кашни премийĕ 5.000 тенкĕ.

2. ПОЭЗИ ЕНĔПЕ:

Сăвăсен сборникĕсем, поэмăсем, сăвăллă повеçсемпе романсем (вĕсен пысăккăшĕ пĕр пин йĕркерен кая мар пулмалла).

Поэзин чи лайăх произведенийĕсене премилеме çакăн пек премисем тăвас:

Пĕрремĕш премисем—1 преми, 15.000 тенкĕ.

Иккĕмĕш премисем—2, кашни премийĕ 10.000 тенкĕ.

Виççĕмĕш премисем—3, кашни премийĕ 5.000 тенкĕ.

3. ДРАМАТУРГИ ЕНĔПЕ:

Драмăсем, трагедисем, комедисем (драматурги произведенийĕсем пĕр актлă тата нумай актлă пулма пултараççĕ).

Драматургин чи лайăх произведенийĕсене премилеме çакăн пек премисем тăвас:

Пĕрремĕш премисем—1 преми, 15.000 тенкĕ.

Иккĕмĕш премисем—2, кашни премийĕ 10.000 тенкĕ.

Виççĕмĕш премисем—3, кашни премийĕ 5.000 тенкĕ.

Асăрхаттарни: Çÿлте кăтартнă мĕнпур виçĕ раздел тăрăх ачасем валли çырнă произведенисене те тăратма юрать.

4. ЖИВОПИÇ ЕНĔПЕ:

Çуллă краскăпа, пастельпе, акварельпе тата ыттисемпе çырнă, мĕнпур йышши жанрлă картинăсем (портрет, пейзаж, композици).

Живопиçăн чи лайăх произведенийĕсене премилеме çакăн пек премисем тăвас:

Пĕрремĕш премисем—1 преми, 15.000 тенкĕ.

Иккĕмĕш премисем—2, кашни премийĕ 10.000 тенкĕ.

Виççĕмĕш премисем—3, кашни премийĕ 5.000 тенкĕ.

5. СКУЛЬПТУРА ЕНĔПЕ:

Мрамортан, бронзăран, гипсран, чулран тата ыттисенчен тунă, мĕнпур йышши жанрлă скульптурăсем (портрет-бюст, фигура, композици тата ытти те).

Скульптурăн чи лайăх произведенийĕсене премилеме çакăн пек премисем тăвас:

Пĕрремĕш премисем—1 преми, 15.000 тенкĕ.

Иккĕмĕш премисем—2, кашни премийĕ, 10.000 тенкĕ.

Виççĕмĕш премисем—3, кашни премийĕ 5.000 тенкĕ.

6. МУЗЫКА ЕНĔПЕ:

Оперăсем, музыкăллă комедисем, симфонисем, кантатăсем, юрăсем т. ыт. те.

Музыкăн чи лайăх произведенийĕсене премилеме çакăн пек премисем тăвас:

Пĕрремĕш премисем—1 преми, 15.000 тенкĕ.

Иккĕмĕш премисем—2, кашни премийĕ 10.000 тенкĕ.

Виççĕмĕш премисем—3, кашни премийĕ 5.000 тенкĕ.

Кунсăр пуçне, хавхалантарас шутпа памалли премисем 6 преми—кашни раздел тăрăх пĕрер преми тăвас, кашни премийĕ 1.000 тенкĕ пулать.

Литература произведенийĕсене конкурса конкурс пуçланнă хыççăн 1942 çулти октябрĕн 1-мĕшчен, машинкăпа чăвашла пичетлесе памалла; живопиçпе скульптура произведенийĕсене кирлĕ пек чăркаса памалла.

Произведенисене конкурса девизсемпе тăратмалла.

Халиччен сыпăк-сыпăксемпе е пĕтĕмĕшпех пичетленсе тухнă произведенисене конкурсра пăхса тухмаççĕ.

Конкурса пынă ку е тепĕр произведенине пичетлесе кăларасси çинчен тăракан ыйтăва конкурс жюрийĕ кашни произведени пирки уйрăммăн татса парать.

Асăрхаттарни: Произведенисене (сыпăк-сыпăксемпе е пĕтĕмĕшпе) девизпа, çав произведени конкурса пынине кăтартса кăна пичетлесе кăларма юрать.

Искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕн начальникĕ В. РЖАНОВ.

Чăваш АСС Республикинчи Совет Писателĕсен Союзĕн Правлени председателĕ А. ЭСХЕЛЬ.

Республикăри предприятисен ăмăртăвĕ

УЛАТАР, июнĕн 4-мĕш. Паровозсем юсакан завод коллективĕ Канашри вагонсем юсакан заводпа ăмăртса ĕçленĕ май, хăй çине илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Завод май уйăхĕнче планран ытлашши пĕр паровоз юсаса кăларнă. Тимĕрç цехĕ майри плана 113,5 процент тултарнă. Кунти рессорсем тăвакан отделени çурçулти плана: паровоз рессорĕсене тăвас тĕлĕшпе — 103,1 процент, вагон рессорĕсене тăвассипе 111 процент тултарнă.

Шăратакан цех халиччен пекех малта пырать. Вăл çурçул планне 121 процент ытла тултарнă. Токарно-механически цех та çурçулти плана майăн 28-мĕшĕнчех тултарчĕ, майăн юлашки виçĕ кунĕ хушшинче планран иртерсе икĕ пин килограмм ытла детальсем хатĕрлесе кăларчĕ.

ÇĔМĔРЛЕ. «Труженник» заводри стружка тăвакан цехри стахановка Евдокия Подклетнева юлташ май уйăхĕнче рекордлă çитĕнÿ турĕ. Вăл пĕр станок çинче ĕçлес вырăнне, икĕ станок çинче ĕçлесе 39.920 килограмм стружка хатĕрлесе чăркаса пуçтарчĕ.

Подклетнева юлташ июнь уйăхĕнче ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ÿстерме пулчĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 5-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Май уйăхĕнчи производствăлла программăна Çĕмĕрле комбиначĕ 99,2 процент тултарчĕ.

Уйрăм цехсен показателĕсем: майри плана иккĕмĕш номерлĕ цех—91,8, виççĕмĕш—87,5, тăваттăмĕш—94,5 процент тултарнă.

Ытти тĕрлĕ продукцисем туса кăларас тĕлĕшпе плана 299,9 процент, мебель енĕпе 103 процент, хăма çуракан цех 122 процент тултарнă.

И. БАТЫРШЕВ.
Планово-производственнăй отделăн начальникĕ.

КАНАШ. **(Хамăр корр.).** Вагонсем юсакан завод коллективĕнчи чылай рабочисем тата уйрăм бригадăсем хăйсен кулленхи нормине ытлашшипех тултараççĕ пулин те, пĕтĕмпе илсен, завод май уйăхĕнче çителĕксĕр ĕçлерĕ.

Вагонсем тăвакан пĕрремĕш комплекслă бригада уйăхри плана вунă процент, вагонсем юсакан комплекслă бригада 35,66 процент кăна тултарнă. Урапасем тăвакан цех майри плана 92,8 процент тултарнă.

Тимĕрç цехĕ поковка туса кăларас тĕлĕшпе май уйăхĕнчи плана 102,7 процент тултарнă, анчах рессорсем туса кăларас плана 68,8 процент, пружинăсем туса кăларассине 22 процент кăна пурнăçланă. Механически, йывăç касакан цехсем те плана чылай тултарайман. Вагонсем юсакан цехри комплекслă бригадăсем те май уйăхĕнче начар ĕçлерĕç.

Материалсем çитменни завода ăнăçлăн ĕçлеме чăрмантарса тăрать. Кашни кунах мĕн те пулин çитмест. Снабжени, планово-производствăлла отделсем начар ĕçлеççĕ.

КУСЛАВККА, июнĕн 5-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Комбинат туса кăларнă пĕтĕм продукцин хисепне илсен, пиллĕк уйăхри плана 97,7 процент тултарнă.

Май уйăхĕнчи показательсем питех те начар. Уйăхри плана çурри ытларах кăна тултарнă. Цехсен показателĕсем çакăн пек: майри плана хăма çуракан цех—93,9, типĕтекен цех—58,4, древцех—51,6 процент кăна тултарнă.

Çурçул планне срокчен тултарассишĕн Карбитова, Филиппов, Никитин, Кузнецов, Васильева, Белова, Фадеева т. ыт. юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсен нормисене яланах ирттерсе тултараççĕ.

В. САРЫЧЕВ.
Планово-производственнăй отдел начальникĕн заместителĕ.

Артель çирĕпленет, унăн тупăшĕ ÿсет

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялти «Труд» промартель членĕсем, партипе правительство йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пынă май, çĕнĕ таварсем туса кăларма хăнăхаççĕ. Канашри ашкакай комбиначĕн отходĕсенчен тирсем тума тытăннă. Артельре çăм тăла, михсем çĕлемелли пир тата çăматă производствисене организациленĕ. Çак çĕнĕрен организациленĕ промысласем тăрăх иртнĕ пиллĕк уйăх хушшинче 101 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Артель членĕсем кулленех ăмăртса ĕçлеççĕ, ĕç тухăçлăхне, иртнĕ çултипе танлаштарсан, 15,5 процент ÿстерчĕç.

Партипе правительство йышăннă постановлени вырăнти чĕртаварсен ресурсĕсемпе анлăн усă курма май туса пачĕ. Артель вырăнти чĕртавартан галантерейнăй хром туса кăларма тытăнчĕ. Çак продукцине 1941 çулта 100 пин тенкĕлĕх туса кăлармалла.

Артель правленипе Чăвашшвейпромсоюзăн чĕртавар хатĕрлесси çине ытларах çаврăнса пăхмалла. Кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе те ĕçе хастарлăнрах тытăнни кирлĕ. Çурмафабрикатсенчен галантерейнăй таварсем туса кăларассине анлăнрах организацилемелле.

«Труд» артель çурçулти плана майăн пĕрремĕшне тултарса, планран ирттерсе 56 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетсе, накоплени планне тăватă уйăх хушшинче 47,3 пин тенкĕлĕх ирттерсе тултарчĕ. Çакă вăл артелĕн рентабельноçне çĕклесе ячĕ.

Артель коллективĕ çулталăкри плана Октябрьти Социализмлă революци кунĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешет. Çак обязательствăна коллектив чыслăн пурнăçа кĕртĕ.

И. МОКЕЕВ,
«Труд» промартель правленин председателĕ.

Хурт-хăмăр утарĕсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Анатри Кушмарари «Комсомолец» колхоз иртнĕ çул хурт-хăмăр утарĕ организацилерĕ. Утарта малтанхи çулах 12 вĕллерен 14 вĕллене çитрĕ. Кăçал колхоз 20 вĕллене çити ÿстерме ĕмĕтленет. Çавăн пекех пыл тухăçлăхне те нумай илме тăрăшаççĕ. Кусене тума условисем пур.

Хурт-хăмăр утарĕ илемлĕ сад-пахчине вырнаçнă. Кунта çырла йывăççисем, хурлăхан, улмуççи йывăççисем ешĕреççĕ. Хурт-хăмăр ĕçне В. Ярухин колхозник йĕркелесе пырать.

Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхозăн та пысăк йышлă утар пур. Колхозăн утарĕ вăрманти пĕр уçланкăна вырнаçнă. Вĕсем валли унта апат çителĕклĕ. Шупашкар Ĕсмĕлĕнчи «Волга» колхоз кăçал пыл хурчĕсене вăрмана кăларса лартрĕ. Вĕсене астума уйрăм хуралçă тата хурт-хăмăр ĕçне пĕлекен çынна уйăрнă.

Ф. ДАНИЛОВ.

Выльăхсене пĕтĕлентермесĕр хăвармалла мар

Кавалти «Маяк» колхозра (Вăрмар р.) виççĕмĕш çул ĕнтĕ выльăхсене пĕтĕлентермелли пункт ĕçлет. Ку пунктра кĕсресене, ĕнесене, сурăхсене, качакасене искуственнăй майпа пĕтĕлентереççĕ. Унта пĕр «русский рысак» ăратлă ăйăр, «красно-горбатовский» ăратлă вăкăр, ăратлă такасем пур.

Кăçалхи сезонра планпа 150 кĕсре, 175 ĕне чуптармалла. Вĕсене апрель уйăхĕнче чуптарма пуçланă. Паянхи куна 75 кĕсре, 85 ĕне чуптарнă. Халĕ кунта куллен 8—9 кĕсре, 3—5 ĕне чуптараççĕ.

Кавал колхозĕ кĕсресене чуптарас плана 50 процент тултарнă. Анчах хăшпĕр колхозсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хакламасăр, кĕсресене чуптарма илсе пымасăр, кирлĕ вăхăта сая яма пултараççĕ.

Акă, Мăнçырма колхозĕн ку пунктра 5 кĕсре, Çĕнĕ Кавал колхозĕн 4 кĕсре чуптармалла, анчах вĕсем паян куна та райçĕрĕç пайĕн кăтартуне пурнăçламасăр тăраççĕ. Çавăн пекех Пăвакасси колхозĕн те 14 кĕсре чуптармалла пулсан, 2 кĕсре çеç чуптарнă-ха.

Кавал колхозникĕсем хăйсен сурăхĕсене те, качакисене те çак пунктрах искуственнăй майпа пĕтĕлентереççĕ.

Случной пункта И. Петроградский юлташ ертсе пырать. Ку пункт хăйĕн ĕçĕн усăллăхне кăтартса пама ĕлкĕрчĕ те ĕнтĕ. Вăл колхозсене, колхозниксене паха ăратлă выльăхсем ĕрчетме пулăшать.

В. ТУРТУШ.

И. Акимов—Пăрачкав районĕнчи колхозник. Белофинсене хирĕç пынă çапăçура хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн правительство ăна «Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав» орденĕпе награсăланă.

К. БАБАЕВ. фото-ÿкерчĕкĕ.

„ИЗОБРЕТАТЕЛЬСЕМ“

Çичĕ çул вĕренмелли шкултан аран-аран вĕренкелесе тухнă хыççăн, Мишшан чĕри лăштах кайнă.

— Çук,—тенĕ вăл,—çынсем кирек те мĕнле, а манран тек вĕренсе пулмастех!

Чăн та, пулнă каланă пекех: унпа пĕрле вĕренсе тухнă ачасем хăшĕ педучилищĕсенче, хăшĕ вăрман техникумĕнче вĕреннĕ, Мишша çеç ниçта та вĕренмен.

Педучилищĕне кĕме тесе вăл та заявлени парса пăхнăччĕ, анчах, малтанхи испытанирех «провалиться» тунă пирки, ытти предметсемпе испытанине те тăман вăл, килне таврăннă. Вара пĕр хĕл те пĕр çу урам тăрăх çÿресех иртнĕ унăн. Сисмен те—кĕркунне çитсе те тăнă. Ачасем каллех, кутамккасем çакса, шкулсене утнă.

— Ачам,—тенĕ Мишшана ун чух аппăшĕсем,—Петĕрсем тепĕр çултан учитель пулса тухаççĕ тет вĕç,—намăс мар-и сана 10—12 çулхи ачасемпе картла выляса çÿреме?!

Анчах Мишша намăса пĕлекен йышши мар мĕн.

— Намăс валеçнĕ чух килте пулман эп!—тенĕ вăл вĕсене хирĕç.

Пĕррехинче Мишша, таçтан, темле майпа, «Сĕнтĕрвăрринчи Çĕрйĕркелÿ техникумне «плохолисене» те илеççĕ тет, кĕрсен вĕренме те питĕ çăмăл тет» тенĕ хыпар илтсе таврăннă. Çав хыпара ĕненсе, вăл Сĕнтĕрвăрринелле тухса утнă. Çитнĕ. Испытанине тăнă. Темле «чудăна» пула Мишша ячĕ илнисен списокĕнче вырăн тупнă. Хăй те сисмен Мишша, Сĕнтĕрвăрринчи Çĕрйĕркелÿпе мелиораци техникумĕн студенчĕ пулса тăнă. Унччен те пулман, ăна лайăх общежитине вырнаçтарнă, çĕнĕ одеял панă, çĕнĕ матрац, çĕнĕ кровать—вĕрен те вĕрен, отличник пул, стипенди ил!.. Анчах Мишша техникума вĕренес, ăслă пулас, государствăна пысăк усă паракан çын пулас тесе килмен мĕн. Вăл аппăшĕсем вăрçнăран тата юлташĕсенчен кăшт лайăх мартан кăна килнĕ кунта. Çавăнпа та унăн пуçĕнче вĕренес шухăш сахал пулнă. Каç пулнă, вăл, хăй пек кахалсемпе пуçтарăнса, картла çатлаттарнă е, алла кукăр авăрлă тимĕр туя тытса, ресторансем тăрăх çÿренĕ. Ирхине хăçан тăрас тенĕ—çавăн чух тăнă. Уроксене çÿрес килнĕ—çÿренĕ, çÿрес килмен—выртсах юлнă. Кашни шăматкун ир-ирех килне тухса вĕçтернĕ, тунтикун юлашки уроксене çитнĕ-и, çук-и, е тепĕр чух эрни-эрнипех уроксене çÿремен. Çапла «вĕренсех» Мишша, хальхи пек чĕнес тесен — Михаил Костушкин, курсран курса куçса пырса, темле «чудăна» пула 3-мĕш курса çитсе тăнă. Виççĕмĕш курсра та вăл хăйĕн йăлинчен пĕр утăм та пăрăнман; кашни урокра тенĕ пекех «плохо» илнĕ, кашнинчех преподавательсемпе тавлашнă, харкашнă.

— Эсĕ мана кураймастăн, çавăнпа «плохо» паратăн. Пĕлетпĕр эпир сана мĕнле çыннине!—тенĕ хĕрелсе кайса. Преподавательсем çинчен ачасем хушшинче элеклĕ сăмахсем сарма тăрăшнă, май килнĕ çĕрте унталла-кунталла çырса яма та именсе тăман. Нимĕн тума та ÿркенмен Михаил Костушкин — пĕр вĕренме çеç ÿркеннĕ! Хуллен-хулленех хĕл иртсе экзамен вăхăчĕсем çывхарса пынă. Преподавательсем студентсем валли консультацисем тунă. Мишша консультацисене çÿремен, каллех, аллине тимĕр туя тытса, Атăл хĕррипе калла-малла кумса çÿренĕ.

Ыран «Строительная механика» предмечĕпе испытани тытмалла тенĕ чух, Михаил Костушкинăн пуçĕ сасартăк ĕçлеме тытăннă. «Ыран мĕнле майпа «отлично» çаклатма пулать-ши?—тесе шухăшланă вăл, çавăн чухнех шухăшласа та кăларнă. Испытани пулакан класа ир-ирех вăрăм хăва хулă кÿртсе хунă вăл. Мишшана сĕтел патне чĕнсен, алла билет илсен, çав билетри ыйтусене вăл хут татки çине çырса илсе питĕ чеен хыçалалла ывăтса парать. Хыçалти парта хушшинче ларакан юлташĕ кĕнекесем çинчен çырса илет те хайхи хулă вĕçне хĕстерсе хуллипе Мишшана уринчен кăлт тĕртет. Пулчĕ.

— Мĕнле?—ыйтнă Мишшаран тепĕр класс студенчĕсем, вăл испытанирен тухсан.

— Мĕн мĕнли, ясно, «отлично»! — тенĕ вăл. — Эсир ăна çĕрĕ-çĕрĕпе вĕренсе ларса та «пос» кăна илетĕр. Эпĕ сирĕн пек вĕренес пулсан, виç уйăхра пĕтерсе тухатăп техникума!—тенĕ. Предмет хыççăн предмет иртнĕ, вăл халлĕхе «хорошоран» кая илмен.

Черетпеле унăн вырăс чĕлхипеле испытани памалла пулнă. «Опасно» сăмаха та «обаздно», «тележка» сăмаха «дележга» тесе çырать пулин те, диктант çырассинчен хăрас шухăш пулман ун. «Икĕ лайăх çыракан студент хушшине ларап та, «все будет в порядке»,—шутланă вăл. «Ун пек ĕç тухмасан—вăрçатăп та «пос» лартса паратех»,—тенĕ. Çапах та текст содержанине пĕлесшĕн хытă çуннă вăл. «Лермонтов произведенийĕсенчен çыртарать пуль, ыттисене çавăнтан çыртарнă», — тесе библиотекăна темиçе хутчен чупа-чупа пынă, анчах чееререххисем илсе кайнă пулнă мĕн Лермонтов кĕнекисене те. Мишша ахалех тăрса юлнă. Икĕ лайăх çыракан студентсем хушшине ларасси те пулайман: преподаватель сиснĕ. Ирĕксĕрех хăйĕн чăн-чăн пĕлÿлĕхне кăтартмалла пулнă. 150 сăмахра 63 йăнăш тунă.

Çырупа «провалиться» тунине сиссен, устнăй испытанире реванш илме ĕмĕтленнĕ Костушкин. Лайăх вĕренекен студентсен конспекчĕсене тупса пĕтĕм ыйту тăрăх уйрăм хут татки çине çырса илет те, чипер кăсъесенех шăтарса пиншак подкладкипе çиелти пичĕ хушшине тĕркелет, унта кĕрейменнисене çурăм хыçне, пиççихи хушшисене хĕстерсе тухать, çапла, хăюллăн утса пырса кĕрсе ларать малти парта хушшине. Анчах кунта та ĕç тухмасть Мишшан. Преподаватель пĕлнĕ пекех, ăна тÿрех доска умне чĕнет, япала ячĕн суффиксĕсене мĕнле çырасси çинчен каласа пама ыйтать. Костушкин чĕнмест. Хăлхисене чăнк тăратать те, унталла-кунталла пăхкалать. Преподаватель, Костушкин чăкăлташма, кутăнлашма юратнине шута илсе, çăмăл ыйтусем парать, çапах та вăл пĕр ыйтăва та тĕрĕс ответ параймасть. Преподаватель ăна «плохо» лартса парать.

— Чепуха!—тет вăл шăл витĕр. — Пĕлетпĕр эпир сана мĕнлине! Пĕррех перет те билетне, çилленсе тухса каять.

* * *

Сĕнтĕрвăрринчи Çĕрйĕркелÿпе мелиораци техникумĕ—Чăваш республикинчи çамрăк техникум. Кашни çулах унтан 60—70 ача вĕренсе тухса хамăр çĕршывăн аслă республикисене — совхозсемпе колхозсене саланаççĕ. Унтан тухакан специалистсем пурте пекех хăйсен ĕçĕсене тĕплĕн те мухтавлăн туса пыраççĕ. Нумайĕшĕ ĕç нормисене уйăхран уйăха 400—500 процент тултарса пыраççĕ. Хăйсене вĕрентсе кăларнă преподавательсене ырласа çырусем яраççĕ, тав тăваççĕ. Çав вăхăтрах техникума Мишшасем те килсе леккелеççĕ. Вĕсем хăйсем кахаллипе, ытти ачасене те пăсма тăрăшаççĕ. Мишша пеккисем валли совет шкулĕнче çирĕп алă пулмалла.

В. ÇАВАÇ.

Е. Карпов — Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхоз председателĕ. Ку колхоз çуракине районра чи малтан вĕçленĕ.

Г. КОСТИН фото-ÿкерчĕкĕ.

Республика уйхирӗсенче

Ӑмӑртура трактористкӑсен бригади мала тухрӗ

СЕНТЕРВАРРИ. Машинно-тракторнӑй станцинче трактористкӑсен хисепӗ ҫулран ҫул ӳсет. Кӑҫал хӗрарӑмсен тракторнӑй бригадине организациленӗ. Трактористкӑсем пурте ӑмӑртӑва тухнӑ. Ку бригадӑра массӑллӑ ӗҫе Ростиславцева, техникӑллӑ вӗренӗве Григорьева юлташсем ертсе пыраҫҫӗ. Овчинникова юлташ стена хаҫат редакторӗ пулса ӗҫлет. Никифирова юлташ кулленхи сменӑн ӗҫӗсем ҫинчен МТ Станцине пӗлтерсе тӑрать. Трактористкӑсем хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене вӑхӑтра туса пыраҫҫӗ. Михайлова тата Семенова юлташсем уя кӗнекесем илсе тухаҫҫӗ, каннӑ вӑхӑтра пурне те илтмелле вуласа параҫҫӗ. Тракторнӑй бригадӑн бригадирӗ Григорьева тата унӑн помощникӗ Ростиславцева трактор ӗҫне лайӑх пӗлеҫҫӗ, трактористкӑсене вӑхӑтра пулӑшаҫҫӗ.

Хӗрарӑмсем ӗҫлекен 4-мӗш номерлӗ тракторнӑй бригада ҫурхи ӗҫсен планне ытти бригадӑсенчен малтан—майӑн 29-мӗшне 109 процент тултарчӗ. Ӗҫӗн пахалӑхӗ лайӑх. Е. Овчинникова трактористкӑна республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ.

Халӗ тракторнӑй бригада ҫӗртме сухи тӑвать.

Тракторнӑй бригада ӗҫне чӑрмантаракан сӑлтавсем пулман мар. Чкалов ячӗпе тӑракан колхозра ӗҫленӗ вӑхӑтра плугарьсене вӑхӑтра уйӑрса паман пулнӑ. «Наука Ленина» колхозра тракторсемпе сухаламалли участоксене лашапа сухаласа вакласа пӗтернӗ.

Трактористкӑсен ӗҫ условийӗ лайӑхланать. Вӗсем валли халӗ 8 вырӑнлӑ будка туса панӑ.

Г. ЗАКАМСКИЙ,
МТС директорӗн политика енӗпе ӗҫлекен помощникӗ.

Ирхи ҫӗртме туса пӗтернӗ

СОВЕТСКОЕ. Районра чылай колхозсем, ҫуракине кӗске срокра тата пысӑк тухӑҫлӑхпа акса пӗтернӗ хыҫҫӑнах, ирхи ҫӗртме сухине тума тытӑнчӗҫ.

Чемей ялсоветне кӗрекен «Страж революции» колхоз вӑйлӑ тырпул туса илет, вӑл кӑҫалхипе виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗ пулса тӑрать.

Ҫавнашкалах «Сеятель» колхоз та кашни ҫулленех вӑйлӑ тырпул туса илет. Вӗсем иртнӗ ҫулта, ирхи ҫӗртме сухине вӑхӑтра туса хӑварса, кашни гектартан вӑтам шутпа 17,87 центнершар ыраш туса илнӗ.

Кивуйӗнчи «1-ое Мая» колхоз та кашни гектартан ыраш 17,35 центнер, кӗрхи тулӑ 18,99 центнер туса илнӗ.

Ҫав хушӑрах ирхи ҫӗртме туман Дворикри «Добролет» колхоз вӑтамран кашни гектартан 4,74 центнер туса илнӗ. Салугинри «Красный Октябрь» 5,64 центнер, Лапракассинчи «Сталинград» колхоз 6,30 центнершер кӑна туса илнӗ.

Халь районра нумай колхозсем ирхи ҫӗртме сухи тӑвас ӗҫе тытӑнчӗҫ.

Чемей ялсоветӗнчи «Страж революции», «Сеятель», «Искра», Николаевскинчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем ирхи ҫӗртме тӑвас плана пӗтӗмпех тултарчӗҫ.

Ҫав хушӑрах Анат Сӑнарти «Новый путь», Дворикри «Добролет», Шаптакри «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхозсем ирхи ҫӗртме тӑвасси ҫинчен шутламаҫҫӗ-ха.

Н. МИХЕЕВ.

Вожатӑйсен вӗренӗвӗ ҫинчен

Пионер отрячӗсен ӗҫӗ лайӑх пулса пырасси вожатӑйсенчен нумай килет. Вожатӑйсем лайӑх ӗҫленӗ ҫӗрте пионерсем хушшинчи ӗҫсем аван пыраҫҫӗ. Ҫакна нумай тӗслӗхсемпе кӑтартса пама пулать.

Анат Кӑмашари (Ҫӗмӗрле р.) вӑтам шкулта вожатӑй пулса А. Мизуров юлташ ӗҫлет. Вӑл хӑйӗн ӗҫне юратса туса пырать. Кӑҫал ку шкулта пионерсем хушшинче ӗҫлесси чылаях лайӑхланнӑ. Сборсем вӑхӑтра, интереслӗ иртеҫҫӗ. Вожатӑй ертсе пынипе хӗллехи вӑхӑтра «На штурм» ятлӑ ҫар вӑййи, йӗлтӗрпе ярӑнмалли ӑмӑртусем пулса иртнӗ. Пионерсен драмкружокӗ лайӑх ӗҫлет. Драмкружок ҫывӑхри ялсене кайса спектакльсем лартса парать, вечерсем ирттерет.

Шӑхасанти вӑтам шкулти вожатӑй Антонов, Шупашкарти 1-мӗш № шкулти вожатӑй Алексеева, 2-мӗш № шкулти вожатӑй Семенов юлташсем те лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем яланах пионерсем хушшинче. Вӗренӳре кая юлакансемпе уйрӑмӑн калаҫаҫҫӗ, пулӑшу параҫҫӗ.

Анчах вожатӑйсен нумайӗшӗн пионерсем хушшинче ӗҫлеме пӗлни ҫителӗксӗр-ха. Вӗсен вӗренӗвӗ ҫине ку таринччен ҫителӗклӗ ҫавӑрӑнса пӑхман. Райкомолсем тепӗр чухне, пӗр-пӗр кампани пуҫланас умӗн, васкавлӑ йӗркепе семинарсем иртеркеленӗ. Ҫав семинарсем вожатӑйсене нимӗнле пӗлӳ те паман, ӗҫлеме вӗрентмен.

Нумай пулмасть ЦК ВЛКСМ старший вожатӑйсен вӗренӗвӗ ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Халӗ старший вожатӑйсене хатӗрлес тӗп форма вӑл — харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренесси пулать.

Вожатӑйсене вӗренме программа та ҫирӗплетнӗ («Вожатый» журналӑн 6-мӗш номерӗнче пичетленӗ).

Ҫак программа тӑрӑх, вожатӑйсен пионер организацисен движенине, ачасем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе туса пыма лайӑх пӗлмелле. Программӑра ҫар ӗҫӗпе физкультура тата ачасене вӑй ҫитнӗ таран ӗҫлеме хӑнӑхтарас ыйтусене пысӑк вырӑн панӑ. Вожатӑйӑн отрядпа командовать тума, Морзе азбукине, походсене йӗркелесе иртерме пӗлмелле. Кашни старший вожатӑйӑн лайӑх физкультурник пулмалла. Унӑн шывра ишме, йӗлтӗрпе лайӑх ҫӳреме пӗлмелле. Тата ҫутҫанталӑкри явленисем ҫинчен, ӳсен-тӑрансем ҫинчен те пӗлес пулать.

ЦК ВЛКСМ кӑтартса панӑ тӑрӑх, программӑри материалсене вожатӑйсен кӑҫалхи ноябрӗн 1-мӗш тӗлне вӗренсе пӗтермелле. Вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн, вӗсене «Старший вожатый юных пионеров», тесе ят параҫҫӗ.

Вожатӑйсене ҫӗнӗ майпа хатӗрлесси ВЛКСМ райкомӗсенчен нумай килет. Вӗсен вожатӑйсен вӗренӗвне организацилемелле тата ертсе пымалла. Харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренекен вожатӑйсене пулӑшма ВЛКСМ райкомӗсен лекцисем, консультацисем иртермелле, литература та тупса пама тӑрӑшмалла.

Вожатӑйсен вӗренӗвӗ — пысӑк ӗҫ. Кашни старший вожатӑй хӑй тӗллӗн ӗҫлетӗр, хӑйӗн пӗлӗвне пӗрмаях пуянлатса пытӑр, пионерсен коллективӗн чӑн-чӑн руководителӗ тата организаторӗ пултӑр. Ҫак ӗҫре вӗсене партипе комсомол организацийӗсем тивӗҫлипе пулӑшса пыни кирлӗ.

И. СОРОКИН.

Ҫунасем ҫӑмӑр айӗнче выртаҫҫӗ

Шупашкарти пристаньре Атӑл тӑрӑх ямалли таварсене тирпейсӗр пӑхса усраҫҫӗ. Унта хаклӑ таварсенех уҫӑ ҫӗре хунӑ, вӑл шутран ҫӑмӑрпа йӗпенсе юрӑхсӑра тухма пултаракан япаласене те курма пулать.

Шывпа ямалли ҫунасем нумайранпа ӗнтӗ ҫӑмӑр айӗнче выртаҫҫӗ. Ҫав ҫунасене юр кайса пӗтиччӗнех ҫыран хӗррине антарса пӑрахнӑ.

Н. КИЛЯКОВ.

Сӗнтӗрвӑрринчи катка пичке тӑвакан заводри стахановка А. Крюкова юлташ. Вӑл хӑйӗн нормине кашни уйӑхрах 180—200 процент таран тултарать.

Куславкка комбинатӗнчи сушильнӑй цехри моторист-стахановец И. Ростов юлташ. Вӑл хӑйӗн нормине кашни уйӑхрах 200 процент тултарать.

Плана мӗншӗн тултараймастпӑр?

КУСЛАВККА. Дзержинский ячӗпе тӑракан завод коллективӗ ҫурҫул планне срокчен тултарассишӗн кӗрешме чӗннине сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, Куславкка комбинатӗнчи хӑма ҫуракан цех коллективӗ социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнчӗ, кашни кун 580-шер кубометр хӑма ҫурма обязательство илчӗ. Кулленхи ӗҫре мӗн куратпӑр-ха? Майӑн 26-мӗшӗнче—295 кубометр, 27-мӗшӗнче—346, 28-мӗшӗнче—427, 29-мӗшӗнче—339, 30 мӗшӗнче—356 кубометр ҫуртӑмӑр. Малтанхи икӗ кунӗнче плана тултарайманнин «сӑлтавӗ» бассейнра элеваторӑн шыв айӗнчи сӑнчӑрӗ татӑлса кайнинче пулнӑ.

Комбинатра нумаях пулмасть капитальнӑй ремонт пулса иртрӗ. Кун хыҫҫӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем пуласса кӗтмеллеччӗ ӗнтӗ. Анчах апла пулмарӗ. Тӗрӗссипе каласан, ремонт туман, машинӑсене ҫиелтен керосинпа ҫӗҫ сӗрсе тухнӑ. Ку ӗҫе иртерме малтанах хатӗрленмен пирки ремонт тума ҫӗнӗ детальсем илсе килмен. Цехри обрезной станоксем кивелнӗ, вӗсем час-часах ванаҫҫӗ. Дробилкӑсем те часах ҫӗмӗрлеҫҫӗ. Майӑн 22-мӗшӗнче пӗр дробилкӑн подшипникӗ, теприн — холостой шкив ҫурӑлса кайса, малтанхи—2 сехет хушши, иккӗмӗш—пӗр кун хушши ӗҫлемесӗр ларчӗҫ.

Сӗрмелли материала план тӑрӑх уйӑхра 1.150 килограмм расходламалла пулсан, пирӗн вӑл 4—5 хут ытла пӗтет. Мӗншӗн? Пӗр енчен эпир хамӑр та сӗрмелли материала тирпейсӗр тыткалани пулнӑ, анчах снабжени отделӗ кутӑнла ӗҫлесе пыни питех те тӗлӗнтерет пире. Хӗллехи кунсенче сӗрмелли материал—шӗвви, халӗ—мазь евӗрли кирлӗ. Кунта халь пирӗн ӗҫ йӑлтах тепӗр майлӑ пулса пырать. Хӗлле мазь илсе килсе парса тарӑхтарчӗҫ. Ӑна кашни деталь ҫумне кӗреҫи-кӗрепипе ҫыпӑҫтарсан та уссине нимӗн чухлӗ те кӳмесчӗ. Ҫак мазя пулах ӗнтӗ, капитальнӑй ремонт валли тесе панӑ 175 килограмм баббита хӗллехи кунсенчех расходласа пӗтернӗ. Кун пирки эпир директорӑн тата главнӑй инженерӑн хӑлхисене йӗрӗнтерсе ҫитернӗ ӗнтӗ.

Силовой станцин транспортерне ӗҫе кӗртме комбинат руководителӗсем цемент «тупаймаҫҫӗ». Ҫак транспортер ӗҫлеменнипе цехра час-часах хутнӑ ҫӗре каймалли материал купаланса кайнӑ пирки, рамӑсене чарса лартма тивет.

Кадрсемпе ӗҫлес ыйту тивӗҫлӗ вырӑнта тӑмасть. Апрель уйӑхӗнчен вара цехра 3-мӗш механик ӗҫлет. Вӗсене кашни 10 кун хушшинче улӑштарса тӑраҫҫӗ.

Асӑннӑ ҫитменлӗхсене халех пӗтермелле, комбинат администрацийӗн тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла.

Е. ЦЫГАНОВА,
ССР Верховный Совечӗн депутачӗ, хӑма ҫуракан цех начальникӗ.

Ӗҫ дисциплини ҫук ҫӗрте

ИШЛЕЙ. Мӑн-Мамӑшри промысла артелӗн производство планӗнче чӑпта ҫапса кӑларсси пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫавӑн пекех тата артелӗн пурҫӑн хурчӗ ӗрчетмелле, сахал мар вӗрен явмалла.

Иртнӗ ҫулта артелӗн чӑпта 131000 штука ҫапса кӑлармалла пулнӑ пулсан, 86000 штука кӑна ҫапса кӑларнӑ. 1941 ҫулта артелӗн план тӑрӑх 91000 штука чӑпта ҫапса кӑлармалла (иртнӗ ҫулти планран нумай сахал). Чӗртавар плана икӗ хут ытла тултармаллӑх пур пулин те, артель плана тултарса пыраймасть. Иртнӗ ҫулти I кварталта артель 60000 штука ытла чӑпта туса кӑларнӑччӗ. Кӑҫал тӑватӑ уйӑх хушшинче мӗнпурӗ те 35000 штука кӑна ҫапса кӑларчӗ. Ассортиментсем тӑрӑх илсе пӑхсан, ултӑ ассортимент вырӑнне, пӗр ассортимент тӑрӑх кӑна плана тултарнӑ.

Артель членӗсен шучӗ те сахал мар, вӗсем 250 ҫын ытла. Чӗртавар пур. Анчах мӗншӗн-ха артель плана тултараймасть?

Правлени аппаратӗнче ӗҫлекен работниксем членсем патне тухса ҫӳремен, ҫӳремеҫҫӗ те. Членсемпе производствӑллӑ канашлусем хӗл каҫа пӗр хутчен кӑна туса иртернӗ. Ӗҫ дисциплини начар. Членсем артельти ӗҫе пӑрахса, пасартан мунчала сутӑн илсе, е килте ӗҫлеме тытӑннӑ.

Хӑшпӗр членсем ҫакна палӑртас мар сӑлтавпа артельрен 100 штука чӑпта ҫапмалӑх хӑйсем патне мунчала илсе каяҫҫӗ те 7—8 уйӑх хушши ӗҫлем пекки тӑваҫҫӗ, пуринчен ытла скупчиксем валли ӗҫлеҫҫӗ. Ялсовет исполкомӗ шута илсе тухнӑ тӑрӑх, артель членӗсенчен кӑҫал 39 станокпа 30000 штука, артель членӗ маррисем 18 станокпа 13000 штука чӑпта ҫапса скупщиксене сутнӑ.

Кунта уйрӑмӑнах ҫакна палӑртмалла: членсем артель ӗҫне туса тупӑш илнинчен подоходнӑй налогсем тӳлеҫҫӗ. Скупщиксенчен е пасартан мунчала илсе чӑпта сутакансен тупӑшӗ пачах пытанса юлать.

Ҫак фактсем ҫине ку вӑхӑта ҫити районри организацисем ҫаврӑнса пӑхман.

Н. ЯШКОВ.

Ҫурҫул планне тултарнӑ

Охверкино ялӗнчи (Элӗк р.) «Самолет» промартелӗ (правлени председателӗ Никитин юлташ) ҫурҫул планне срокченех тултарнӑ.

Пӗтӗмпе илсен, ҫулталӑкри производствӑллӑ плана артель паянхи кун тӗлне 60 процент тултарнӑ.

ФЕЛЬЕТОН

Сармантейӑн сар чӑххи пирки

Сармантейӑн сар чӑххи сар ҫӑмарта тунӑ, тет. Ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантейӗ те йӗнӗ, сар чӑххи те какаланӑ, хапхи те уҫӑлса хупӑннӑ.

Шӑп ҫав вӑхӑтра Пӑла хӗрне пӗр вӑкӑр шыв ӗҫме аннӑ. Вӑкӑр хапха ахаллех уҫӑлса хупӑннине курнӑ та унран ыйтнӑ:

— Мӗншӗн эсӗ, хапха, так ахаллех уҫӑлса хупӑнатӑн?

Хапха вӑкӑра Сармантейӑн сар чӑххин ҫӑмартине шӑши ҫапса ҫӗмӗрнӗшӗн Сармантейӗ те, сар чӑххи те куляннине ҫинчен тата хӑй те ҫавӑншӑнах уҫӑлса хупӑнни ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

— Апла пулсан эпӗ те мӗкӗрме пуҫлатӑп,—тенӗ те вӑкӑр шыв хӗрне мӗнпур вӑйӗпе мӗкӗрсе ҫывхарма пуҫланӑ.

— Мӗншӗн эсӗ, вӑкӑр, мӗкӗретӗн? — ыйтнӑ шыв. Вӑкӑр та шыва хӑйне хапха каласа панине пӗтӗмпех каласа кӑтартнӑ.

— Эпӗ те ҫавӑншӑн мӗкӗретӗп,—тенӗ вӑл юлашкинчен.

— Апла пулсан эпӗ те халех хумханма пуҫлатӑп, — тенӗ шыв. Вара вӑл хӑй патне пӗр хӗрарӑм шыв ӑсма пынӑ чух хумханса тӑнӑ. Ку хӗрарӑм та сар ҫӑмарта ҫӗмӗрӗлнӗ пирки пулса иртнисене илтсен:

— Апла пулсан эпӗ те витрене ҫӗклесе ҫапатӑп, — тенӗ те ҫавӑнтах хӑй каланине тунӑ.

— Мӗн эсӗ шывсӑр килетӗн? — ыйтнӑ ку хӗрарӑмран килӗнче чуста ҫӑрса юлнӑ кинӗ. Хунемӗшӗ ӑна йӑлтах каласа панӑ.

— Апла пулсан...— тенӗ те кинӗ, чустине чӗрессипех урама кӑларса ҫапнӑ. Чӗрес урама тухса ӳкнин сӑлтавне пӗлсен, ҫамрӑк арӑм упӑшки те хӑйӗн аттине тула кӑларса ывӑтнӑ.

Шӑп кӑна ҫав вӑхӑтра пирӗн колхоз председателӗ Селиванов унтан иртсе пынӑ.

— Мӗн эсӗ, ухмаха тухрӑн-им? — ыйтнӑ вӑл атӑ кӑларса пӑрахакана хытӑ ятласа. Лешӗ Сармантей чӑххинчен пуҫласа хӑй атӑ кӑларса ывӑтнӑ таран пӗтӗмпех каласа панӑ ӑна.

— Ну-у, — тенӗ Селиванов, — апла пулсан эпӗ те колхозра пӗр собрани те тумастӑп, ку хуйхӑпа пӗр-ик черкке кайса яратӑп ӗнтӗ.

Чӑнах та Селиванов вара колхозниксен аслӑ собранине виҫӗ уйӑх ытла (февральтен вара) туман. Хӑй час-часах «хуйхӑпа» ӗҫсе канцелярине ӳсӗр пырса ларнӑ. Пӗррехинче ӑна счетовод Ильин астутарнӑ:

— Эсӗ, Селиванов, ӗҫме пуҫларӑн, собранисем те тумастӑн-ҫке, ма-ха апла?

— Ара эсӗ пӗлместӗн-им?.. — пуҫласа янӑ Селиванов, вара вӑл Сармантей халапне пӗтӗмпех каласа панӑ.

— Апла пулсан,— тенӗ Ильин тарӑхса, эпӗ те ӗҫме пуҫлатӑп. Вара чӑнах та Ильин канцелярине тепӗр кунех ӳсӗр пынӑ. Ун хыҫҫӑн ӑна темиҫе хутчен те канцелярийче ӳсӗр ларнине курма пулнӑ.

Пӗррехинче Селивановпа Ильин та канцелярийче чухне унта касса председателӗ Д. Степанов пырса кӗнӗ те вӗсем мӗншӗн ӳсӗррине ыйтса пӗлнӗ. Лешсем харӑссӑнах Сармантей халапне калама тытӑннӑ. Степанов тимлӗн итлесе ларнӑ та:

— Апла пулсан эпӗ те колхозниксен пӗр заявленине те пӑхса тухмастӑп,— тесе канцелярийчен тухса кайнӑ. Ӑна бригадир хирӗҫ пулнӑ.

— Мӗн эсӗ пит хирӗҫнӗ паян? — ыйтнӑ вӑл.

Степанов та ыттисем пекех Сармантей халапне тӗплӗн каласа панӑ.

— Апла пулсан, — тенӗ бригадир,— эпӗ те кӑҫалхи акара ҫӗре кивелнӗ фигурӑллӑ йӗркепех сухалаҫҫӗ. Чӑнах та вӑл ҫапла сухалама тытӑннӑ. Анчах кӑҫалхи ҫураки вӑхӑтӗнче пирӗн колхоз ҫумӗнчи комсомол организацин собранийӗ пулса иртрӗ, вӑл бригадира фигурӑллӑ йӗркепе сухалассине ЦК ВКП(б) тата ССР Союзӗн Совнаркомӗ пӑрахӑҫлани ҫинчен астутарчӗ. Бригадир хӑйӗн йӑнӑшне тӳрлетнӗ, анчах ыттисем ҫаплипех улшӑнусӑр тӑраҫҫӗ-ха. Колхозри стена хаҫачӗ те вӗсене вирлӗн шӑйӑрса илчӗ, анчах вӗсен тирӗ Сармантей чӑххин ҫӑмарти хуппи пек ҫӳхе мар, вӗсене шӑши хӳри мар, пӗр пӑтлӑ пуканпа тивретсен те витерме ҫук.

Ку фельетона эпир Чкаловски районри Тикеш ялӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсенчен илтсе ҫыртӑмӑр.

М. АРКАЙ.

Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗсем

Толя Васильев

Толя Васильев шкула кайма тытӑнсанах техникӑпа интересленме пуҫланӑ. Пӗррe вӗсен килӗнче будильник ӗҫлеме пӑрахнӑ пулнӑ. Кунпа Толя интересленнӗ, ӑна сехет ҫӳременни кӳрентернӗ. Вӑл будильнике пӑсса мӗншӗн ҫӳременнин сӑлтавне тупнӑ, юсанӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн ӑна килтисем тӑрӑхласа «техник» тесе чӗнме пуҫланӑ.

Толя уйрӑмӑнах автомашинӑсемпе интересленнӗ. Малтанхи хут автомашинӑна Вӑрнар станцинче курнӑ. Ун хыҫҫӑн Толя автомашинӑна мӗн вӑйӗпе, мӗнпе, мӗнле чупни ҫинчен нумайччен шутласа ҫӳренӗ.

1936 ҫулта Хутарти сельпо ҫӗнӗ автомашина кӳрсе килнӗ пулнӑ. Машина ҫинче шофер И. Лескин юлташ ӗҫленӗ. Толя Васильев ҫак шоферпа часах туслашнӑ, унпа пӗрле автомашина ҫине ларса Ҫӗмӗрлене тата ытти ҫывӑхри вырӑнсене кайса ҫӳренӗ.

Пӗррехине, Ҫӗмӗрлерен Хутара таврӑннӑ чухне, автомашина ӗҫлеме чарӑннӑ. Шофер машинӑна хута ярас тесе нумайччен тӑрмашнӑ. Ку ӗҫре ҫамрӑк «шофер» хӑйӗн юлташне машинӑна юсама кирлӗ хатӗрсене илепанӑ, ӑҫта, мӗнле пайсем ларнипе паллашнӑ, машинӑн пайӗсем мӗнле ӗҫленине курнӑ. Каярахпа шоферпа пӗрле Толя час-часах машинӑна ҫу сӗрнӗ, ҫунӑ, баллонсене тултарнӑ, камерӑсене саплanӑ, хӑйӗн пӗлӗвне хӑпартсах пынӑ. Вӑхӑт нумаях та иртмен, Толя хӑй тӗллӗн автомашинӑна чуптарма вӗреннӗ.

Толя хӑй тӗллӗн 1940—41 ҫулти вӗренӳ ҫулӗнче Е. А. Чудаков «Автомобиль» ҫинчен ҫырнӑ кӗнекисем тӑрӑх вӗреннӗ. Ҫакӑ вӑл физикӑна лайӑх пӗлме пулӑшнӑ. Уйрӑмӑнах вӑл электричествӑпа ҫутӑ пайӗсене лайӑх пӗлет. Ахаль мар вӑл хӑй тӗллӗн радио лартма, репродукторсем, наушниксем тума пултарать. Пӑсӑк наушниксене, репродукторсене колхозниксене юсаса парать. Вӑлах ӗнтӗ виҫҫӗмӗш ҫул фотографи енӗпе ӗҫлет. Лайӑх карточкӑсем ӳкерме пултарать. Кӑҫалхи ҫул вуннӑмӗш класс пӗтерсе вӑтам пӗлӳ илнисӗр пуҫне, хӑй тӗллӗн автомашинӑна вӗренсе шофер правине илет.

Унӑн пултаруллӑ ӗҫне кура Толяна Главвыставком 1941 ҫулти ялхуҫалӑх выставкин участникӗ пулма ҫирӗплетнӗ.

С. БАТЬКОВ.

Тӑрӑшса ӗҫленине пула

1940 ҫулта тата кӑҫалхи пӗррмӗш кварталта ирӗклӗ страховани тӗлӗшпе Шӑмӑршӑ районӗ республикӑра чи кайри вырӑнта тӑнӑ. Район плана нихҫан та тултарман, страховани ӗҫӗ енӗпе массӑллӑ ӑнлантару кунта пачах та пулман.

Хальхи вӑхӑтра, апрель уйӑхӗнчен пуҫласа, кунта страховой инспектор пулса Игнатьев юлташ ӗҫлет. Хӑй ӗҫне вӑл питӗ те тӑрӑшса тунипе, страховани ҫинчен ӑнлантару ӗҫне анлӑн сарнипе, Игнатьев юлташ Шӑмӑршӑ районне малти вырӑна кӑларма пултарчӗ.

Ирӗклӗ страховани енӗпе Шӑмӑршӑ районӗ халӗ республикӑра пӗррмӗш вырӑнта тӑрать.

Ачасене тӑрантарса усрас ӗҫре витаминсем мӗнле вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ

Ача сывӑ, кирлӗ пек лайӑх аталанса ӳстӗр тесен, ӑна тӗрӗс тӑрантарса усрас пулать.

Эпир ҫиекен апат-ҫимӗҫре белоксем, ҫусем, углеводсем, минераллӑ таварсем пур. Анчах та ӳсекен ача организмне тӗрӗс аталанса пыма ҫак япаласем кӑна ҫителӗклӗ мар-ха. Ача сывӑ, ҫирӗп аталанса ӳстӗр, тӗрлӗ чир-чӗре сахалрах парӑнмалла пултӑр тесен, вӑл ҫиекен апатра тепӗр йышши япаласем — витаминсем пулмалла. («Витаминсем» — «пурнӑҫшӑн кирлисем» тенине пӗлтерет, вӑл латинла «вита» — «пурнӑҫ» сӑмахран тухнӑ).

Витаминсем—питех те тӗрлӗ составлӑ химиллӗ япаласем. Ҫутҫанталӑкра вӗсем нумай мар, анчах вӗсем ҫын организмне питех те пысӑк усӑ кӳреҫҫӗ. Витаминсем ҫыннӑн сывлӑшне, юн таптине вӑйлатаҫҫӗ, ҫӗнӗ апатпа организма лайӑхрах усӑ курма пулӑшаҫҫӗ.

Ачана мӗнле витаминсем кирлӗ-ха? Ача лайӑх аталанса ӳстӗр тесен, ӑна ҫитерекен апатра А витамин ҫителӗклӗ пулмалла. Ҫак витамина тӗрӗссипех ӗнтӗ ӳсме пулӑшакан витамин теҫҫӗ. Вӑл уйрӑм клеткӑсене вӑйлӑн ӳсме пулӑшать, ҫинӗ апатпа тӗрӗс усӑ курма тата тӑрантаракан япаласене клеткӑсем хушшинче тӗрӗс пайланма пулӑшать,—ҫакӑ вӑл ачашӑн уйрӑмах кирлӗ. А витамин сӗтре, ҫура, хӑймара, ҫӑмарта сарринче питӗ нумай, вӑл пулӑ ҫӑвӗпе пӑру пӗверӗнче те нумай. Ҫак продукцинче А витамин йӑлтах хатӗр пулать, кӑкӑр сӗтӗнчен пуҫне урӑх апат ҫитерме пуҫланӑ хыҫҫӑн, ҫав продуктсене ачана пама тытӑнас пулать. Нумай улма-ҫырласемпе пахча-ҫимӗҫсенче ҫак витамин йӑлтах хатӗр мар, ӑна провитамин теҫҫӗ. Организмра вӑл чӑн-чӑн А витамин пулса тӑрать. Ҫавӑн пек провитаминсем помидорта, кишӗрте, симӗс пӑрҫара, купӑстара, шпинатра, арбузра, панулминче, чей ҫырлинче, виноградра нумай.

Апатра А витамин ҫук пулсан, ача организмӗ кирлӗ пек лайӑх аталанаймасть: ача начар ӳсет, начарланать, унӑн ӳт-тирӗ типӗ пулать, сӗвкеленет, ҫӳҫсем типӗ пулаҫҫӗ, хуҫкаланаҫҫӗ. Ачасен ҫӑмӑллӑнах бронхит, ӳпке шыҫҫи пуҫланма пултарать, вӗсен хӑш чухне куҫ роговици пӑсӑлать (ҫак йывӑр чире ксерофталми теҫҫӗ). Революцичченхи Российӑра, пуриншӗн те паллӑ ӗнтӗ, ӗҫҫыннисен апат начар пулнӑ, ҫавӑнпа та унта чӗпкуҫ текен чир (куҫ ҫути вӑйсӑрланни) анлӑн сарӑлнӑ пулнӑ.

А витамина ҫавӑн пекех тата сикекен чирсенчен сыхлакан витамин теҫҫӗ: апатра ҫу тавращӗ (урӑхла каласан, А витамин) ҫителӗксӗр чухне ачасене сикекен чир-чӗрсем часрах ерме пултараҫҫӗ.

Ача организмӗшӗн С («цэ») витамин питӗ те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫак витамин ачана вӑл амӑшӗн варӗнче чухнех кирлӗ. Вӑл ачасен организмӗнчи мӗнпур процессене активлӑлатать, сикекен чирсем ересрен лайӑхрах сыхланма пулӑшать, туберкулезран, крупознӑй пневмонирен, вар-хырӑм тифӗнчен тата вар-хырӑма ерекен ытти чирсенчен сывалма пулӑшать. С витамин организма апатпа тӗрӗс усӑ курма пулӑшать, юн тӑвас ӗҫе хутшӑнать.

Апатра С витамин ҫителӗклӗ пулсан, юн составӗ (урӑхла каласан, гемоглобин, юнӑн хӗрлӗ тата шурӑ шарикӗсен хисепӗ) мӗнле пулма тивӗҫлӗ ҫавӑн пек пулать, ҫакна пула вара пирӗн организмӑн мӗнпур клеткисемпе тканӗсем кирлӗ чухлӗ кислород илсе тӑраҫҫӗ. Апатра С витамин ҫителӗксӗр чухне юн сахал, ача имшеркке пулать, ачан ҫиес килми пулать, вӑл хӑвӑрт ывӑнать, ӑна тӗрлӗ йышши чир-чӗр хӑвӑрт ерме пултарать.

Ҫутҫанталӑкра С витамин питех нумай. Вӑл нумай пахча-ҫимӗҫсенче, улма-ҫырласенче, ҫавӑн пекех хӑшпӗр ӳсен-тӑрансенче нумай. С витамин хура хурлӑханта, ҫӗр ҫырлинче, лимонсенче, мандаринсенче, крыжовникре, панулминче (уйрӑмах антоновски улмасенче) питӗ нумай. Вӑл клюквӑра, виноградра, арбузра, грушӑра сахалрах.

Ҫавӑн пекех хӑшпӗр пахча-ҫимӗҫсенче те, сӑмахран, кишӗрте, купӑстара, помидорта, шпинатра С витамин нумай. Ҫырласемпе пахча-ҫимӗҫсенчен ачасем валли сӗткен туса хатӗрлеҫҫӗ: ҫырласене вӗретнӗ шывпа ҫӑваҫҫӗ те сӗткенне пӑчӑртаса кӑлараҫҫӗ, кишӗре е купӑстана, вӗсен сӗткенне пӑчӑртаса кӑлариччен малтан, тураса вӗтетеҫҫӗ. Пирӗн консервланӑ сӗткенсем те пур, вӗсене тӗттӗмре сулхӑн вырӑнта сыхласа усрасан, вӗсенчи витамин пӗтмест. Анчах та ачасене чӗрӗ ҫимӗҫсенчен хатӗрленӗ сӗткенсем парсан лайӑхрах пулать.

С витамин шӑлан (йӗплӗ хулӑ йывӑҫҫи) ҫырлисенче нимӗнринчен те нумайрах. Аптекӑсенче шӑлан ҫырлисенчен хатӗрленӗ экстракт тата типӗ таблеткӑсем туянма пулать (экстракта ачасене кунне 1—2 кашӑк параҫҫӗ).

Хура хурлӑханран хатӗрленӗ варенире С витаминӑн пӗр пайӗ сыхланса юлать.

Виҫӗ уйӑх тултариччен С витамина ача кӑкӑр сӗчӗпе пӗрле илет, анчах та ача амӑшӗ ҫителӗклӗ ҫимӗҫсем ҫиет пулсан кӑна ҫав витамин унӑн сӗтӗнче С витамин пулать. Ача тӑватӑ уйӑх пурӑнсан, ӑна ҫав витамина сӗткенсемпе парас пулать.

Д витаминсӑр та ача организмӗ тӗрӗс аталанма пултараймасть. Апатра Д витамин ҫук пулсан, ачан рахит чирӗ пуҫланать; ҫак чир пуҫлансан шӑмӑсем кукӑрӑлаҫҫӗ, ҫемҫелеҫҫӗ, ача кирлӗ пек аталанса ӳсеймест, каярах юлса ларма тата утма пуҫлать.

Д витамин организмра хӑйӗнче хатӗрленет, анчах та ҫапла пултӑр тесен, кирлӗ пек апатсем ҫини, тӗрӗс режим кирлӗ тата, уйрӑмах, ҫутӑпа тата сывлӑшпа ҫителӗклӗ усӑ курмалла. Ҫутӑ пулӑшнипе ӳт-тирӗнчи ҫу евӗрлӗ япаласенчен Д витамин пулса тӑрать.

Сыватакан, ҫак витамин питех те нумай шутланакан средство вӑл — пулӑ ҫӑвӗ. Рахит палӑрма пуҫласанах—пилӗк-ултӑ уйӑхра чухнех—ачасене пулӑ ҫӑвӗпе сыватаҫҫӗ. Ҫитӗнмесӗр ҫуралнӑ ачасене рахит пуринчен те ытларах лекме пултарать. Ҫавӑн пек ача амӑшӗ пулӑ ҫуне хӑй ӗҫсен лайӑхрах пулать, ҫапла тусан Д витамин унӑн кӑкӑр сӗтӗнче пулать. Ача ҫураличчен унӑн организмӗнче ҫак витамин ҫителӗклӗ е ҫителӗксӗр пулассин вӑл унӑн амӑшӗ мӗн ҫисе пурӑннинчен килет.

Ҫавӑнпа та йывӑрҫын хӗрарӑмсем Д витаминӑн препаратне ӗҫни питех те кирлӗ. Совет Союзӗнчи витамин промышленноҫӗ таса Д витаминӑн препаратне туса кӑларать, ӑна витаминоль теҫҫӗ. Ӑна темиҫешер тумлам ӗҫеҫҫӗ, анчах та врач хушнипе кӑна.

Пулӑ ҫӑвӗнче А витамин та нумай. Ӑна туберкулезлӑ, сахал юнлӑ, имшеркке ачасене парас пулать. Хальхи вӑхӑтра Д витаминпа пуянлатнӑ пулӑ ҫӑвӗ туса кӑларма пуҫланӑ, ӑна витаминизированнӑй теҫҫӗ, рахитлӑ ачасене параҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑтра В («бэ») витамина сӑнаса вӗренес ӗҫе анлӑн йӗркелесе янӑ. Апатра ҫак витамин ҫителӗксӗр пулсан, пуринчен ытларах шӑрӑх ҫанталӑклӑ ҫӗршывсенче пулакан ҫакӑн пек чир пуҫланать: уйрӑм йышши паралич пулать, апат ҫиес килмест, ӳт-тир тӑртанать. Ҫак витамин ҫӗпрере, уйрӑмах сӑра ҫӗпринче нумай пулать. Ҫавӑн пекех вӑл тырӑсен сӑсӑлӗнче, шпинатра, купӑстара, томатра та сахал мар. В витамин выльӑх-чӗрлӗх пӳринче, пӗверӗнче, мимере, ҫавӑн пекех ҫӑмарта сарринче нумай.

Вӑйсӑрланса юлнӑ, нумай вӑхӑт хушши варвиттипе чирленӗ ачасен, уйрӑмах чир вӑхӑтӗнче пӗр евӗрлӗ апат, пуринчен ытларах ҫӑнӑхран хатӗрленӗ апат (рислӑ шыв, шывпа пӗҫернӗ пӑтӑсем, кӗсел, сухари) ҫитерсе усранӑ ачасен В витамин ҫителӗксӗр пулать. Ҫакӑ вӑл акӑ мӗнле палӑрать: ача начарланать, унӑн ӳт-тирӗ тӑртанать, апат ҫиес килми пулать. Пӗчӗк ачасен аллисемпе урисем начар ӗҫлекен пулаҫҫӗ, пысӑкланнисен ал-ура вӗҫӗсем ыратма пуҫлаҫҫӗ. Ачасенчен сикекен чир-чӗрсем хӑвӑрт парӑнтарма пуҫлаҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршывра ашшӗ-амӑшӗсене сывӑ ачасем пӑхса ӳстерме пулӑшакан учрежденисем—яслӗсем, ача сачӗсем, ача ҫурчӗсем т. ыттисем те нумай. Сӑмахран, ҫакна калани те ҫителӗклӗ: хуласенче 9 пине яхӑн яслӗ шутланать, вӗсенче 520 пине яхӑн вырӑн пур (советлӑ ҫӗнӗ республикӑсенче тунӑ нумай яслӗсем ку шута кӗмеҫҫӗ). Колхозлӑ ялсенчи яланлӑха тата сезонлӑха организациленӗ яслӗсемпе садсенче миллионшар ачасем воспитани илсе ӳсеҫҫӗ.

Ҫак учрежденисенче ҫирӗп, сывӑ, тӗреклӗ ӳт-пӳллӗ ачасем пӑхса ӳстерме чи лайӑх условисем туса парас тесе, совет государстви пӗтӗм мерӑсене йышӑнать.

Пирӗн ачасене пӑхса ӳстерекен вуншар та ҫӗршер учрежденисем, наукӑн чи ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсем тӑрӑх, пӗчӗк ачасене тӑрантарса усрас ӗҫе кӑтартуллӑн йӗркелесе янӑ, апат-ҫимӗҫе ӳсекен ача организмне кирлӗ витаминсемпе пуянлатса пыраҫҫӗ. Сӑмахран, пӗчӗк ачасен 6-мӗш номерлӗ ҫуртӗнче (Мускав) пур ачасене те кашни кунах Д тата С витаминсем параҫҫӗ. Темиҫе ҫул каярах ҫак ҫуртра рахитлӑ ачасем нумай пулнӑ, мӗншӗн тесен унта вӑйсӑр, ҫитӗнсе ҫитмесӗр ҫуралнӑ, ҫӑмӑллӑнах рахита кайма пултаракан ачасене те сахал мар илсе пыраҫҫӗ. 1937 ҫултан пуҫласа ачасене Д витамин пама пуҫланӑ, халӗ унта рахита йӑлтах пӗтернӗ. Ачасен кирек хӑш учрежденийӗ те ҫакӑн пек результатсем пама пултарать тата ӑна тума та тивӗҫлӗ.

М. КАЗАНЦЕВА.
ССР Сывлӑха Сыхлав Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ.

Фабрикӑпа завод ӗҫне вӗренмелли шкулсене илмелли черетлӗ призыв

(Ӗҫ вӑйӗсен резервисен СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Главнӑй Управленийӗн начальникӗпе П. Г. Москатов юлташпа калаҫни)

Июнӗн 5-мӗшӗнче 6 уйӑх вӗренмелли ФЗО шкулӗсене хулари тата ялти ҫамрӑксене вӗренме илес тӗлӗшпе черетлӗ призыв пуҫланать. Пирвайхи призывпа илнӗ, халӗ кӑна шкулсенчен вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксем выранне ҫӗнӗ пополнени—социализмлӑ тӑван ҫӗршывӑн ҫамрӑк гражданӗсем 350 пин ҫын пухӑнаҫҫӗ. Государствӑн ӗҫ вӑйӗсен резервисене туса хурас ӗҫе Советлӑ Латви, Литва, Эстони тата Молдаван республикисем, Дрогобыч, Львов, Ровно, Тарнополь тата Черновицы облаҫӗсем пирвайхи хут хутшӑнаҫҫӗ, ҫак республикӑсемпе облаҫсенче нумаях та пулмасть-ха ҫамрӑксем хӑйсем валли ӗҫ тупаймасӑр пурӑннӑ.

Фабрикӑпа завод ӗҫне вӗренмелли шкулсене совет ҫамрӑкӗсем юратаҫҫӗ. Ҫакна ӑна Днепропетровск, Новосибирск, Чернигов, Ярославль облаҫӗсенчи, Крым АСС Республикинчи тата ытти облаҫсемпе республикӑсенчи райсоветсен районсенчи тата хуласенчи исполкомӗсене пана ҫӗршер те пиншер заявленисем лайӑх кӑтартса параҫҫӗ.

Июнь уйӑхӗнчи призыв малтанхинчен урӑхларах условисенче иртмелле пулать. Халӗ ӗнтӗ призыв комиссийӗсемпе общественнӑллӑ организацисен производство ӗҫне вӗрентмелли ҫӗнӗ система пахалӑхне кӑтартса пама чаплӑ тӗслӗхсем пур. ФЗО шкулӗсенче вӗреннӗ ҫамрӑксен пӗрремӗш выпускӗ социализмлӑ промышленность валли рабочи класӑн лайӑх хатӗрленнӗ пополненине пачӗ. Фабрикӑпа завод ӗҫне вӗренмелли шкулсенче воспитани илнӗ нумай ҫамрӑксем хӑйсен ӗҫӗн лайӑх мастерӗсем пулса тӑчӗҫ. Призыв йӗркипе илекен ҫамрӑксене производствӑллӑ вӗренӳ опычӗ ҫинчен каласа парасси, вӗсене шкулсен ҫитӗнӗвӗсемпе паллаштарасси — призыв комиссийӗсен задачи кӑна мар, тата чи анлӑ общественноҫӑн задачи пулса тӑрать.

Ҫакӑнпа пӗрлех иртнӗ вӑхӑтри призывсенчен хӑшпӗр выводсене тӑвас пулать. Хӑшпӗр районсемпе облаҫсенче ФЗО шкулӗсене валли ҫамрӑксем суйласа илес ӗҫ ҫине кирлӗ пек тимлӗхпе пӑхман, массӑллӑ-ӑнлантарулла ӗҫе ҫителӗклӗ хакламан, призыв (мобилизаци) малашне те пӗрмаях вӗренекенсене пухмалли тӗп принцип пулса тӑрассине маннӑ. Ӗҫҫынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем призыв комиссийӗсене ҫак йӑнӑшсем тепӗр хут пуласран асӑрхаттармалла. Ӗҫ вӑйӗсен резервисен хуласенчи, облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи управленийӗсем, ФЗО шкулӗсен руководителӗсем районсенчи призыв комиссийӗсене куллен кун пулӑшса пыма тивӗҫлӗ.

Призыв ҫитӗнӗвӗ мӗнле пуласси призыв пунктне пыракан ҫамрӑксем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ тата ӑнлантарулла ӗҫе мӗнле йӗркелесе янинчен те килет. Профсоюз тата комсомол организацийӗсемпе пӗрле ФЗО шкулӗсен руководителӗсем шкулсенчен вӗренсе тухнӑ чи лайӑх ҫынсемпе призыва кӗрекен ҫамрӑксем хушшинчи тӗлпулусене организацилеме, призыв пункчӗсенче вӗренекенсен ӗҫне кӑтартса паракан выставкӑсем организацилеме, шкулсене экскурсисемпе кайса кӑтартма, фабрикӑпа завод ӗҫне вӗренмелли система ҫинчен ҫамрӑксене анлӑн ӑнлантарса парас тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнма тивӗҫлӗ.

Июлӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа, ФЗО шкулӗсенче ҫӗнӗрен илнӗ ҫамрӑксене вӗрентме пуҫлаҫҫӗ. Производствӑллӑ вӗренӳ пуҫланиччен юлнӑ срок хушшинче общежитисене хатӗрлес, кирлӗ инвентарь, обмундировани, выртса тӑмалли хатӗрсем тата ыттисене кӳрсе килес тӗлӗшпе мӗнпур ӗҫсене туса пӗтермелле.

Фабрикӑпа завод ӗҫне вӗренмелли шкулсен руководителӗсем ҫӗнӗрен илнӗ ҫамрӑксене производство ӗҫне занятисем пуҫланнӑ пирвайхи кунах кирлӗ пек вӗрентессине организацилессишӗн халех тӑрӑшма тивӗҫлӗ. Иртнӗ наборӑн опытне шута илес пулать. Ун чухне чылай шкулсенче, вӗренӳпе производство бази пулманнипе, нумай вӑхӑт усӑсӑр ҫухалнӑ. Ҫак ҫитменлӗхсене пӗтӗмӗшпех пӗтермелле.

Призыв (мобилизаци) — ӗҫ вӑйӗсен резервисене хатӗрлес ӗҫӗн чи ответлӑ тапхӑрӗсенчен пӗри. Ӗҫҫынни депутачӗсен вырансенчи Совечӗсен, призыв комиссийӗсен, ӗҫ вӑйӗсен хуласенчи, облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи управленийӗсен ҫак призыва татах та организованнӑрах, пӗтӗмӗшпех партипе правительство панӑ кӑтартусем тӑрӑх ирттерме кирлӗ условисем йӑлтах пур.

(ТАСС).

ФЗО шкулӗсене илмелли призыв пуҫланчӗ

ЭЛӖК, июнӗн 5-мӗш. **(Телефон тӑрӑх).** Паян ирхине 9 сехетченех Элӗк, Мӑн Вылӑ, Елаш, Ефремкасси тата Изванка ялсовечӗсенчи 1924—1925 ҫулсенче ҫуралнӑ ҫамрӑксем районри призыв комиссине килме пуҫларӗҫ.

Ҫак ҫамрӑксен туйӑмӗсем пурин те ФЗО шкулне вӗренме каяс хавас кӑмӑлпа тулнӑ. Хӑшӗсем хӑйсене ФЗО шкулне вӗренме илме ыйтса заявленисем ҫырса килнӗ.

Петр Васильев, кӑҫал Элӗкри вӑтам шкултан, 8-мӗш класран вӗренсе тухнӑскер, хӑйӗн заявленийӗ ҫине ҫапла ҫырнӑ:

«Эпӗ социализмӑн активлӑ строителӗ—пысӑк квалификациллӗ рабочи пулас тетӗп. Ҫакна шута илсе мана ФЗО шкулне вӗренме яма ыйтатӑп. Эпӗ 1924 ҫулта ҫуралнӑ».

Призыв комиссийӗ ӗҫе 11 сехетре тытӑнчӗ. Ҫамрӑксем пӗрин хыҫҫӑн тепри призыв комиссине кӗрсе, хӑйсен сывлӑхӗсене тӗрӗслеттереҫҫӗ. Призыв комисси председателӗ «годен» тесе пӗлтерсенех, комиссине кӗриччен хумханнӑ ҫамрӑксем кӑмӑллӑн тухса каяҫҫӗ, пӗр-пӗрне хӑйсен кӑмӑл-шухӑшӗсене каласа параҫҫӗ.

Призыв комисси июнӗн 10-мӗшчен ӗҫлет. Ҫак вӑхӑтра комисси витӗр 308 ҫамрӑк тухмалла, вӗсенчен 156 вӗренме илмелле.

ФЗО шкулӗсене вӗренме каякансем валли тумтирсем хатӗрлеме тытӑннӑ.

(Хамӑр корр.).

ЕВРОПӐРИ, АФРИКӐРИ ТАТА АЗИРИ ВӐРҪӐ

(Вӑрҫӑ ӗҫӗсен дневникӗ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра — авиаци активлӑхӗ. Германи командованийӗн сводкинче каланӑ тӑрӑх, июнӗн 3-мӗшӗнче Германи авиацийӗ Эссекс графствинчи тата Кӑнтӑр Англири промышленность сооруженийӗсем ҫине бомбӑсем пырса пӑрахнӑ. Германи бомбардировщикӗсем Англин суту-илӳ тумалли пӗр пароходне путарнӑ тата тепӗр икӗ суднине сиен кӳнӗ. Ыран июнӗн 2-мӗш тенӗ чух ҫӗрле Германин торпедоносец-самолечӗсем Англин пысӑк ҫар карапӗ ҫине икӗ торпеда пӑрахнӑ. Ыран июнӗн 4-мӗш тенӗ чух ҫӗрле Германи авиацийӗ Гулль ҫине тата Англин кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫ сыранӗсем ҫинчи фортсен сооруженийӗсем ҫине бомбӑсем пырса пӑрахнӑ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, июнӗн 2-мӗшӗнче Англи бомбардировщикӗсен соединенийӗсем Киль каналӗ ҫине пырса тапӑннӑ тата унта пулнӑ суднӑсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Самолетсем ҫавӑн пекех тата Шлезвиг-Гольштейнри ҫар объекчӗсем ҫине те бомбӑсем пӑрахнӑ. Ыран июнӗн 3-мӗш тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсем Германин Дюсельдорф—Рурорт порчӗ ҫине тата Рур облаҫӗнчи ытти объектсем ҫине бомбӑсем пырса пӑрахнӑ. Бомбардировщиксен пысӑк мар соединенийӗ Берлин ҫине пырса тапӑннӑ. Ҫак самолетсемех Остенде порчӗ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Ыран июнӗн 3-мӗш тенӗ чух ҫӗрле сыранри оборона авиацийӗ Сент-Назерти доксем ҫине бомбӑсем пырса пӑрахнӑ. Июнӗн 3-мӗшӗнче Англи самолечӗсем Ҫурҫӗр Франци ҫине пырса тапӑннӑ.

* * *

Вӑтаҫӗр тинӗсӗн бассейнӗнче авиаци ӗҫӗсем кӑна пулнӑ. Итали самолечӗсем, тенӗ Итали командованийӗн сводкинче, Мальта утравӗ ҫинчи аэродромсем ҫине бомбӑсем пырса пӑрахнӑ.

Ҫурҫӗр Африкӑра, Тобрук районӗнче, Германи командованийӗн сводкинче каланӑ тӑрӑх, противниксем пӗр-пӗрин ҫине артиллерирен персе тӑраҫҫӗ. Германипе Итали авиацийӗн соединенийӗсем Тобрук укреплениийӗсем ҫине татах тепӗр хут бомбӑсем пырса пӑрахнӑ. Англи командованийӗ кӑларнӑ коммюникере каланӑ тӑрӑх, Англи самолечӗсем Бенгази ҫине пырса тапӑннӑ. Уйрӑмӑнах порт ҫине бомбӑсем нумай пӑрахнӑ.

Хӗвелтухӑҫ Африкӑра, Абиссинире, авиаципе артиллери ӗҫӗсем палӑраҫҫӗ. Англин Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи сыхлӑш вӑйӗсен командованийӗ кӑларнӑ коммюникере каланӑ тӑрӑх, Англи самолечӗсем Гондар, Сциола (Омо юханшывӗ ҫинче) тата Дебарек районӗсенчи ҫар объекчӗсем ҫине бомбӑсем пырса пӑрахнӑ. Итали командованийӗн сводкинче каланӑ тӑрӑх Галла-Сидамо облаҫӗнче, Омо юханшывӗ патӗнче противниксем пӗр-пӗрин ҫине артиллерирен персе тӑнӑ.

Июнӗн 4-мӗш. (ТАСС).

Абиссинири вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, июнӗн 4-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Абиссинин кӑнтӑр пайӗнчи кӳлӗсен районӗнче хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче итальянецсем танксем пулӑшнипе контратакӑсем тунӑ. Ҫак ҫапӑҫусенче 5.872 итальянеца, колониальнӑй войскӑсенчи 12.010 салтака тыткӑна илнӗ. Кунсӑр пуҫне, 14 танк, 7 бронеавтомобиль, 85 оруди тата ҫар снаряженийӗсем нумай туртса илнӗ. Англичансем малалла кайса пыраҫҫӗ.

Германи командованийӗн сводки

БЕРЛИН, июнӗн 4-мӗш. (ТАСС). Германи ҫарӗн верховнӑй командованийӗ ҫапла пӗлтерет: малтанлӑха шута илнӗ тӑрӑх, Крит ҫинчи ҫапӑҫусенче англичансене 8 пин ҫын ытла тата грексене 4 пин ҫынна тыткӑна илнӗ. Нумай танксем, орудисем, боеприпассем, ҫавӑн пекех тата обмундированипе продовольстви туртса илнӗ.

Иракри лару-тӑру

ЛОНДОН, июнӗн 4-мӗш. (ТАСС). Англин Ҫывӑхри хӗвелтухӑҫӗнчи вӑйӗсен командованийӗ ҫапла пӗлтерет: Англи войскисем Мосула оккупациленӗ. Июнӗн 2-мӗшӗнче Багдадра йӗркесӗрлӗхсем пулнӑ хыҫҫӑн, Ирак правительстви вӑрҫӑ чухнехи пек положени туса хунӑ. Ӗнер хулара йӗркелӗх туса хунӑ.

Вильгельм II вилнӗ

БЕРЛИН, июнӗн 4-мӗш. (ТАСС). Германири информаци бюровӗ ҫапла пӗлтерет: паян Дорнра (Голландия) Германи императорӗ пулнӑ Вильгельм II вилнӗ.

ХРОНИКА

Июнӗн 4-мӗшӗнче Финляндин чрезвычайнӑй посланникӗ тата полномочнӑй министрӗ г. Ю. Паасикиви Мускавран тухса кайнӑ.

Центральнӑй аэродромра г. Ю. Паасикивине ҫаксем ӑсатса янӑ: Наркоминделӑн Протокольнӑй Отделӗн заведующийӗ В. Н. Барков юлташ, дипломатиллӗ корпус тата Финлянди миссийӗн составӗ.

Ачасен творчествин республикӑри олимпиади

1941 ҫулти июлӗн 1-мӗшпе 6-мӗш хушшинче Шупашкар хулинче ачасен творчествин республикӑри олимпиади пулса иртет. Олимпиадӑра шкул ачисем хӑйсем искусство, наука тата техника енӗпе тунӑ творчествӑллӑ ҫитӗнӗвӗсене кӑтартса параҫҫӗ.

Республикӑри оргкомитет ачасен творчествин олимпиадине ирттермелли йӗркесем ҫинчен положени ҫирӗплетнӗ. Ҫав положени тӑрӑх, самодеятельность кружокӗсен ӗҫӗнче хутшӑнса, «отлично» тата «лайӑх» паллӑсемпе вӗренсе пыракан вӗренекенсем олимпиада участникӗсем пулма пултараҫҫӗ.

Ачасен коллективӗсем тата уйрӑм вӗренекенсем олимпиадӑра литература, музыка, хореографи енӗпе тунӑ ҫитӗнӳсене кӑтартаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех декламацисем, чӑваш ташшисемпе юррисем пулаҫҫӗ.

Республикӑри олимпиада умӗн ачасен художествӑллӑ пултарулӑхӗн шкулсенчи тата районсенчи смотрӗсем пулмалла. Вӑл смотрсене июнӗн 10-мӗшпе 20-мӗш хушшинче ирттерме палӑртнӑ.

Шупашкарта ачасен олимпиади тӗлне шкул ачисен тата ҫамрӑк техниксен ӗҫӗсен выставкине организацилеҫҫӗ. Ҫавӑн пек выставкӑсем шкулсенче тата район центрӗсенче те пулмалла.

Хатӗрленӳ ӗҫӗсене йӗркелесе пыма тата смотрсене ирттерме районсенче 5—7 ҫынтан оргкомитетсем тумалла. Вӑл комитетсенче ӗҫлеме партипе комсомол, профсоюз организацисен, райсутӗҫ пайӗсен представителӗсене тата искусство работникӗсене уйӑрмалла.

Республикӑри олимпиада участникӗсене республикӑри оргкомитет палӑртать.

Олимпиада участникӗсен хӑйсен пултарулӑхне пысӑк пахалӑхпа кӑтартма тӑрӑшмалла. Ҫакӑ вӑл — олимпиада участникӗсен умӗнче тӑракан пысӑк задачӑсенчен пӗри пулать.

Районсенчи оргкомитетсен июнӗн 23-мӗшӗ тӗлне республикӑри оргкомитета олимпиада участникӗсем пулма уйӑрнӑ кандидатсене кӑтартса заявкӑсем тӑратмалла. Вӑл заявкӑсенче миҫе кандидат уйӑрнине пӗлтермелле, участниксем тухса калама хатӗрленнӗ юрӑсен, сӑвӑсен программине тӑратмалла. Ҫавӑн пекех юрӑсен, сӑвӑсен, нотӑсен текстне, костюмсене т. ыт. те оргкомитета тӑратас пулать.

Тасалӑхшӑн ҫине тӑрсах кӗрешмелле

«Предприятисемпе чугунҫулсем ҫинче тасалӑх тата элементарлӑ йӗркелӗх туса хурас пулать, ҫав предприятисемпе чугунҫулсене кунсеренех таса та йӗркеллӗ тытса тӑрас пулать», — тенӗ ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ Маленков юлташ докладӗ тӑрӑх йышӑннӑ резолюцире. Ҫакна пурнӑҫлас тӗлӗшпе Элӗкри МТ Станцинчи комсомолецсем ҫине тӑрсах тӑрӑшса ӗҫлеме пуҫларӗҫ. МТС территорийӗнче сапаланса выртакан тимӗр-тӑмӑрсене вӗсем пуҫарнипе пӗр ҫӗре пуҫтарса хунӑ, ҫӳп-ҫапсене пӗтӗмпех шӑлса тасатнӑ, килкарти тавра 300 тӗп ытларах тӗрлӗрен йывӑҫсем лартса тухнӑ. Анчах ҫак вӑхӑтрах тасалӑхшӑн ҫителӗклӗ кӗрешмен предприятисем те пур-ха. Элӗкри «Большевик» промартельте тасалӑх вуҫех ҫителӗксӗр. Артель пӗчӗк те кивӗ ҫурта вырнаҫнӑ, кантӑксем ҫӗмрӗк, урайне вӑхӑтра ҫумаҫҫӗ, нимӗнле культинвентарьсем те ҫук, рабочисем ӗҫленӗ ҫӗртех пурӑнаҫҫӗ.

Районри сӳскантӑр заводӗнче те культурӑлӑх кирлӗ выранта мар. Завод тавра тытнӑ карта йӑтӑнса аннӑ, килкартине выльӑхсем кӗрсе ҫӳреҫҫӗ, ӑҫта пӑхнӑ, унта кантӑр ҫурӑмӗсем вараланса выртаҫҫӗ.

Заводра 150 ҫын ытла ӗҫлет. Анчах, апла пулин те, общественнӑллӑ мунча ҫук, кӗпе-йӗм ҫумалли туман.

Н. ДИМИТРИЕВ.

Ҫӗнӗ производствӑсем

Вӑрмарти «Универсал» артель хӑйӗн производствине вӑйлатсах пырать.

Нумай пулмасть кунта урапа мазӗ тума тытӑннӑ. Ҫитес вӑхӑтра артельре тата урапа кустӑрмисем туса кӑларакан мастерской ӗҫлеме тытӑнмалла.

Туса ҫитермен ҫурт

Шупашкарта, Карл Маркс ячӗпе тӑракан урамра, 24 хваттерлӗ ҫурт пур.

Ку ҫуртра 1939 ҫулта пурӑнма пуҫларӗҫ. Унтанпа икӗ ҫула яхӑн иртрӗ. Ҫапах та ҫак ҫурта халичченнех туса ҫитермен. Ҫурт ҫийӗ пӗрмаях шыв ярать. Виҫҫӗмӗш этажра пурӑнакансем, ҫумӑр ҫума тытӑнсанах, пӗтӗм кӗтессене витресем, тазсем лартса тултараҫҫӗ. Лайӑх тирпейлӗ витнӗ пӳрт-ҫуртсем ҫӗр ҫул ларсан та пӗр тумлам шыв ямаҫҫӗ, ҫак ҫурт вара икӗ ҫул хушшинчех хваттерсене шыв юхнипе тарӑхтара пуҫларӗ.

Ҫакӑ вӑл пӳрт ҫине лайӑх витменнинчен, ӑна туса ҫитерменнинчен килет.

Хваттерсенчи урайсем пӗтӗмпех шултӑркаса пӗтнӗ. Утма та ҫук — урай хӑмисем хӑлтӑртатаҫҫӗ. Урай хӑмисем хушшинче пӳрне кӗрес пек хушӑксем, шӑтӑк-ҫурӑксем.

Вырнаҫтарса ҫитермен чӳречесем те пур. Балконсем туса ҫитерменнипех каҫӑнса лараҫҫӗ.

Хӑшпӗр хваттерсенче водопровод трубисем татӑлса каяҫҫӗ те эрни-эрнипе стенасем тӑрӑх шыв юхать.

Килкартисене ҫаплах тытса лартман. Кӑҫал хӗлле юпасем лартса хӑтланкаларӗҫ. Анчах та, ҫур кун ӗҫленӗ хыҫҫӑн, шӑннӑ ҫӗре чавма ҫук тесе, пӑрахса кайрӗҫ. Юписем ҫаплах унта-кунта йӑванса выртаҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫуркунне те пулса иртрӗ. Ҫӗр те таҫанах ӑшӑнса ҫитрӗ. Ҫапах та, килкарти тытакансем ҫук.

Ҫурт управляющийӗ Иванов хӑйӗн ӗҫне ҫителӗклӗ туса пырас тесе пӗрре те тӑрӑшмасть. Йӗркесӗрлӗхсем, тасамарлӑх, ҫинчен каласан, аллисене сулса ҫеҫ иртсе каять.

Шупашкар хула совет исполкомӗ ҫак ҫурта хӑҫан йӗркене кӗртме шутлатьши?

В. АРХИПОВ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ

КООПЕРАТИВНЫЙ ТЕХНИКУМ

ЦЕНТРОСОЮЗА СССР и РСФСР

ОБ'ЯВЛЯЕТ

ПРИЕМ УЧАЩИХСЯ НА I КУРС БУХГАЛТЕРСКОГО И ТОВАРОВЕДНОГО ОТДЕЛЕНИЙ

ТЕХНИКУМ ГОТОВИТ: бухгалтеров и товароведов для районных союзов и потребительских обществ.

Срок обучения на бухгалтерском отделении—2 года.

Срок обучения на товароведном отделении—3 года.

НАЧАЛО ЗАНЯТИЙ 1 СЕНТЯБРЯ 1941 ГОДА.

В техникум принимаются граждане СССР в возрасте от 15 до 30 лет с образованием в об'еме неполной средней или семи классов средней школы.

Прием заявлений производится с 1-го июня по 10 августа. Все поступающие в техникум представляют следующие документы в подлинниках: а) заявление на имя директора с указанием на какое отделение желает поступить, б) об образовании, в) свидетельство о рождении, г) справку о состоянии здоровья, д) две фотокарточки с собственноручной подписью поступающего.

Приемные испытания производятся с 10 по 25 августа: по Конституции СССР, математике (арифметика, алгебра и геометрия) и русскому языку и литературе в об'еме 7 классов средней школы.

Окончившие неполную среднюю школу или 7 классов средней школы с аттестатом отличника принимаются в техникум без испытаний.

Принятые в техникум обеспечиваются общежитием

Плата за обучение и стипендия устанавливаются на общих основаниях.

АДРЕС ТЕХНИКУМА: город Чебоксары, Чувашской АССР, ул. Ленинградская, дом № 3.

Для ответов должны быть вложены в конверт почтовые марки на 60 коп.

4—2 ДИРЕКЦИЯ.

МАРИИНСКО-ПОСАДСКИЙ ЛЕСОТЕХНИЧЕСКИЙ ТЕХНИКУМ

об'являет осенний прием студентов на 1941—42 учебный год.

ТЕХНИКУМ ГОТОВИТ: 1) техников-технологов по механизации лесозаготовок и 2) техников-лесохозяйственников.

Срок обучения три года.

К приему в техникум допускаются лица обоего пола в возрасте от 15 до 35 лет.

Все поступающие подвергаются испытаниям по Конституции СССР, русскому языку и литературе, математике и физике в об'еме 7-летки.

Окончившие НСШ по основным предметам на „отлично" принимаются в техникум без приемных испытаний.

К заявлению необходимо приложить следующие документы в подлинниках: 1) о рождении, 2) об образовании, 3) о состоянии здоровья и прививке оспы, 4) заверенную автобиографию, 5) три фотокарточки, 6) почтовых марок на 60 коп.

Прием заявлений производится с 15 мая по 15 августа. Приемные испытания с 15 по 25 августа. Начало занятий с 1 сентября.

Явившиеся на испытания должны обязательно пред'являть паспорт или выписку из паспорта, без которого в приеме будет отказано.

Студенты обеспечиваются общежитием, постельными принадлежностями и питанием в студенческой столовой.

Техникум имеет: учебно-опытную лесную дачу, автомашины, электростанцию, тракторы, вполне оборудованные кабинеты, свою звуковую кино-установку, радиоузел и т. д.

АДРЕС: г. Мариинский Посад, ЧАССР, Набережная улица по реке Волге, № 12.

2—2 ДИРЕКЦИЯ.

ПЛАН

лекций, консультаций и товарищеских собеседований, проводимых парткабинетом Чебоксарского горкома ВКП(б) в июне месяце 1941 года.

Числа м-ца	ТЕМЫ ЛЕКЦИЙ	Для кого	Лектор
6	Баланс промышленного предприятия и его анализ	Семинар по эконом. образованию для руковод. предприятий.	Вечтомов.
7	Теория и тактика большевистской партии по вопросам войны, мира и революции.	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Орленко.
10	Основные принципы планирования советской торговли.	Семинар для торговых работников.	Дебнер.
11	Основные черты марксистского диалектического метода (первая лекция).	Для слушателей цикла лекций по философии.	Германов.
13	Баланс промышленного предприятия и его анализ.	Семинар по эконом. образованию для руковод. предприятий.	Вечтомов.
14	Основные принципы планирования и учета народного хозяйства СССР.	Семинар для республиканского актива по экономическому образованию.	Винокуров.
19	Апрельские тезисы Ленина, учение о перерастании буржуазно-демократической революции в социалистическую.	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Сафрошкин.
20	Баланс промышленного предприятия и его анализ.	Семинар по эконом. образованию для руководителей предприятий.	Вечтомов.
24	О порядке кредитования торговых организаций.	Семинар для торговых работников.	Нач. планового отд. Чуваштторга Голева.
25	Основные черты марксистского диалектического метода (вторая лекция).	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Германов.
27	Роль денег и кредита при социализме.	Семинар для республиканского актива по экономическому образованию.	Нарком финансов ЧАССР Семенов.

Индивидуальные консультации.

ПО МАТЕРИАЛАМ XVIII ПАРТИЙНОЙ КОНФЕРЕНЦИИ, ПО МЕЖДУНАРОДНОМУ ПОЛОЖЕНИЮ И ПО ИСТОРИИ ВКП(б): Ежедневно, кроме общевыходных дней, с 20 до 22 часов. Консультанты: т.т. Магуськин и Орленко.

ПО ИСТОРИИ СССР: 10, 17, 24 числа, с 20 до 22 часов.
Консультант тов. Григорьев М. Г.

ПО ДИАЛЕКТИЧЕСКОМУ И ИСТОРИЧЕСКОМУ МАТЕРИАЛИЗМУ: 11, 14, 25 числа с 20 до 22 часов.
Консультанты: т.т. Сафрошкин и Орленко.

ПО АНТИРЕЛИГИОЗНЫМ ВОПРОСАМ: 12, 21 числа, с 20 до 22 часов.
Консультанты: т.т. Цветков и Хаустов.

ПАРТКАБИНЕТ ГК ВКП(б).

ЧУВАШСКАЯ КОНТОРА „ГЛАВКИНОПРОКАТ"

ВЫПУСТИЛА НА ЭКРАНЫ РЕСПУБЛИКИ

НОВЫЙ ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ ФИЛЬМ

Артисты-орденоносцы, лауреаты Сталинской премии

Зоя Федорова

и

А. Абрикосов

В НОВОМ ХУДОЖЕСТВЕННОМ ФИЛЬМЕ.

Фильм рассказывает о славных боевых подругах доблестных бойцов Красной Армии—участницах борьбы с белофиннами

Авторы сценария: орденоносец

С. Михалков,
М. Розенберг.

Режиссер

В. Эйсымонт.

ФРОНТОВЫЕ ПОДРУГИ

Производство Ленинградской ордена Ленина киностудии „ЛЕНФИЛЬМ".
Выпуск „ГЛАВКИНОПРОКАТ".

ВНИМАНИЕ!

С 13-го июня с.г. в с. Ишаках Ишлейского района
ОТКРЫВАЕТСЯ 3-х ДНЕВНАЯ

ЯРМАРКА

Просьба всем торгующим организациям, предприятиям местной промышленности и колхозам выступить на ярмарке с своими товарами.

Ярмарком.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, экономика пайӗн — 0—88, ҫырусемпе рабселькорсен пайӗн — 2—30, «Ӗҫхӗрарӑмӗ» тата «Хатӗр пул» журналсен — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 3123 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293. Ф. 6. 58 84 п. л.